26-72

В. ЛУНКЕВИЧ

# ЧӖРӖ ЧУНЛӐ ЙАПАЛАСЕМПЕ ЙӐВӐҪ-КУРӐКСЕН ПУРӐНӐҪӖ ЙӖРКИ

К. НИКИШЕВ куҫарнӑ



ЧӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ

ШУПАШКАР 1926

В. ЛУНКЕВИҪ

# ҪĔРĔ ҪУНЛĂ ЙАПАЛАСЕМПЕ ЙĂВĂҪ-КУРĂКСЕН ПУРĂНĂҪĔ ЙĔРКИ

К. НИКИШЕВ куҫарнă

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР—1926

Типография «Чувашская Книга» г. Чебоксары, Б. Советская, № 6

Чувашлит № 752 Напечат. 3000 экз.

I

## Пурăнăç çулне ђеђексемпе сарса тухман...

Анклире XVII ĕмĕрте пит ăслă тата нумай вĕреннĕ Ђарљс Тарвин йатлă çын пурăннă. Вăл хăйĕн пĕтĕм ĕмĕрне ăслăлăха сарса, халăха усă кӳресшĕн пурăнса ирттернĕ. Ђарљс Тарвин тĕнђене йуратма хушнă, тата сăнаса пĕлме те канашланă. Вăл çуралса пурăнађђен нумай йапала çинђен çынсем апла та, капла та шухăшланă. Ђарљс Тарвин хăйĕн ăслă пуçĕпе çав иккĕлентерекен йапаласем çийĕнђи тĕтрене сирнĕ: ђăнлăх çине тӳрех усă куçпа пăхма вĕрентнĕ, тĕнђере мĕнле йапала пур, ăна çеç курма ăс панă.

Тарвин калаť: пăхсан, тĕнђе пирĕншĕн савăнăçлă курăнаť; тĕнђере пур йапала та илемлĕн вырнаçса тăнă пек, урăхла пулмалла пек те мар. Тĕнђе çĕр кăкăрĕ çийĕнђи йапаласене пурне те апат-çимĕç çителĕклĕ панă пек: ĕç, çи, савăн, теме çех йулнă. Пурăнăç пур йенђен те савăнăçлă, ним кăлтăксăр шунă пек; кашни йывăç, вĕçен кайăк, пулă. тискер кайăк, хурт-кăпшанкă, ђи пĕђек ђĕрĕ ђун та нийепле хуйхă-суйхă, инкек-синкек пĕлмен пек. Вĕсенђен хăшĕ турат çинђе савăнăçлă ђăкăлтатаť, тепĕри—шывра шăпăлтатаť, виççĕмĕшĕ—ђеђек çинђен ђеђек çине ним шухăшсăр пăртлатса вĕçет, тата нумайăшĕ пурçăн пек симĕс курăк çинђе йе çăра çулçăллă йывăçсем хушшинђе савăнаť. Шутласан, çутă çанталăкра пур те ним ĕçлесе тертленмесĕр аван пурăннă пек курăнаť. Анђах пурăнăç çине тĕплĕрех пăхар-ха?! Апла-и пур те? Йăнăшмастпăри епĕр?—Йăнăшатпăр иккен. Тĕнђере пĕр савăнăç анђах куракан пысăк йăнăш тăваť.

Акă, сăмахран, хамăр тавра ним хуйхăсăр йурлакан кайăксенех илер. Вĕсем пуринђен ытла хурт-кăпшанкăпа. тата тĕрлĕрен йывăç-курăк вăррисемпе тăранса пурăнаççĕ. Çапла тунипе вĕсем шăтса тухса çитĕнес йапаласене, темĕн ђухлĕ ђĕрĕ ђунсене пĕтереççĕ иккен. Аван-ши вĕсен ирхи апатне (хырăмне) лекекенсене?—Аван пулас çук. Тата вĕсем хăйсем те, хуйхăсăр йурлаканскерсем, кашни сехетре, кашни

минутра тěрлěрен вěçен кайăксен, тăватă ураллă хайар кайăксен тата ытти ђěрě ђунсен çăварне пиншерěн, пиншерěн лекмеççě-и? Тата çав тем пек тискер, хăрушă хайар кайăксем хăйсем йепле пурăн калаççě-ши?—Вěсем пайан тутă, ыран выçă, мěншěн тесен вěсем пайан пěр-пěр ђěрě ђуна тытнă та çимěç нумай; анђах ыранах нимěн те çук, выçăпа шăлна çырт та, вилсе вырт. Çапла ěнтě çав тискер кайăксен пурăнăçě те вăхăтăн-вăхăтăн пěрре те савăнăçлă мар. Çук: пурăнăç ытлашшипех пăтăрмахлă йывăр йапала вăл, çийелтен пăхсан анђах ыррăн курăнаť. Шутласан, çěр çинђе çуралса пурăнакан ђěрě ђунсен пурăнăç сулě тăршшěпех ђеђек сарса тухман. Тěплěрех пăхсан, ђěрě ђунсем пур те вăрçăра тăракан салтаксем пек пурăнаççě. Вěсем хушшинђе çěр çинђи ырălăхшăн, çутăшăн, ăшăшăн, сывлăшпа çимěçшěн, ађа-пăђашăн, йăхне-ăруне йышлăлантарасшăн пěр май ђарăнми вăрçă тăраť. Çав вăрçăра вěсем йе йěркеллě, йе йěркесěр кěрешмелле пулаççě. Пурăнăç вăл йантăпа пулмасť! Акă, сăмахран, ăмсанмаллăх тěсě те çук кăпшанкă, йе тěнђери тěлли-паллисěр ђи пěђěк ђěрě ђун! Вěсем те пурăнăçра кирлине вăрçса илеççě. Йывăç пахђинђе, уйра, çеçен хирте, вăрманта, шывра, çунатлă ђěрě ђунсем вěçсе çўрекен сывлăшра, тата тěрлě йывăç-курăка апат парса, тěрлě ђěрě ђуна пытарса хăтаракан тăпра ăшěнђе, пěр сăмахпа каласан—пур çěрте те пурăнăçпа йышланас ирěкшěн пěр май вăрçă тăраť. Пурăнассăн тăрăшни, хăраса сехре хăпни; тăшмансем, ђир-ђěрсем, тата йулашкинђен вилěм те—тутлăхпа, савăнăçпа, телейпе пěрлех çўреççě: тěнђере пурăнакан пур ђěрě ђунăн та пурăнăçě çавăн пек.

Çапла, пурăнăçшăн пěр май тăрăшмала—инкек-синкекрен сыхланмалла, ђир-ђěре ђăтăмлăн ирттермелле, тăшмантан пăрăнмалла, йе унпа парăнмасăр вăрçмалла. Çакă мари вара пурăнăç вăрçи?—Çакă. Унтан тěнђере пурăнакан ђěрě ђунлă йапалана никам та хăтарма пултараймасť. Çавăнпа кашни ђěрě ђунăн вăйě çитнě таран хăй ырălăхěшěн хăйěн тăрăшмалла; хăйне те, йăхне те упрамалла. Пуринђен те çителěклě, лăпкă пурăнăçа тата телейе нумай тăрăшса ěçленипе çех тупма май пур. Çавăнпа вěсем, пурăнăç çулě çинђи мěн пур ђăрмантаракан йапалана сирсе тупаканшăн, икě хут хаклă пулмалла.

II

## Пурӑнӑҫшӑн тавлашни.

Ҫапла, тӗнҫе—вӑрҫакан ҫарӑ вырӑнӗ; пурӑнӑҫ—вӑрҫӑ. Камха ӗнтӗ вӑрҫаканӗсем? Йепле вӑрҫаҫҫӗ вӗсем? Вӑл вӑрҫӑ мӗнре курӑнаҭ?—Акӑ мӗнре: шаккалпа тилӗ пӗр татӑк тутлӑ апатшӑн вӑрҫаҫҫӗ. Вӗсен хушшинҫи вӑрҫӑ мӗншӗн тухнине кам пӗлмӗ-ха ӗнтӗ! Тихӑрӑн аллинҫи ҫимӗҫне кашкӑрсемпе кийенсем туртса илесшӗн, ҫавӑнпа вӑл вӗсемпе ҫапӑҫаҭ. Кунта та вӗсем мӗншӗн тапӑҫни кашни ҫынах виттӗр курӑнаҭ. Йулашкинҫен, ӑмӑрт кайӑк хӑй тӗл пулнӑ тилӗне хӑватлӑ, ҫивӗҫӗ ҫӗрнисемпе йарса илнӗ те, йӑвине ҫӗклесе кайасшӑн тӑрӑшаҭ. Кусем хушшинҫе каллех вӑйлӑ вӑрҫӑ тухнӑ. Анҫах кунта та ҫапӑҫу мӗншӗн тухни ҫинҫен шухӑшласа пуҫа ҫӗмӗрме кирлӗ мар: ӑмӑрт кайӑка апат кирлӗ, тиллӗн тӑшман аллине лекнӗ «ҫулӑхнӑ» телейсӗр пуҫне хӑтармалла. Ҫаккӑн пек ҫух та вӑрҫӑ мӗншӗн тухни куҫ умӗнҫе. Вӑрҫакансен вӑй-хӑваҫӗсем пӗртан; вӗсенҫен кашни, тӑшмана ҫӗнтерес шутпа, хӑйӗн мӗн пур хатӗрне, ҫейелӗхне ӗҫе кӗртет; телей (ҫӗнтерӳ) иккӗшӗн йенҫе те ылмашлӑ курӑнаҭ; вӗсенҫен кам ҫӗнтерессине малтанах татса каласа пама йӑвӑр. Ҫаккӑн пек вӑрҫӑ пайан пӗрре, ыран тепре пулма пултараҭ, анҫах пуринҫе те ҫӗнтерӳ—кӗтмен хушӑран килнӗ телейрен килет.

Тата тӗнҫере урӑх майлӑ кӗрмешӳ (вӑрҫӑ) пур. Вӑл вӑрҫӑра вӑрҫакансен вӑй-хӑвӑҫӗсем тан мар: вӑйли вӑйсӑррипе, тискер кайӑк хӑйӗн аллине лекнӗ ҫӗрӗ ҫунпа тавлашаҫҫӗ. Сӑмахран илер: хурҫӑкапа тӑри, тилӗпе кролик (сайка), йе тата ула кайӑкпа хупӑ ҫийекен шӗкӗ хушшисенҫи вӑрҫӑ мӗнпе пӗтессине кам малтанах татса каласа памӗ? Шухӑшласа пӑхӑр-ха! Пултарӗ-и шӗкӗ ула кайӑка, тӑри хурҫкана ҫӗнтерме? Тӑришӗн хурҫкаран хӑтӑлма тӑрӑшсан та ҫитӗҫҫӗ, анҫах ӑна та кӗтме йӑвӑр: вӑл та икӗ телейлӗ. Ҫавӑнпа тӑрийӗн, пурӑнас килет пулсан, тӑшманран сыхланасси ҫех йулаҭ: вырӑнсӑр хурҫка куҫӗ тӗлне пулма йурамасҭ, йе, тӑшман ҫывхарнине сиссенех, ун куҫ умӗнҫен пӑрӑнса мӗн пур вӑй ҫитнӗ таран айӑккалла тарма тӑрӑшас пулаҭ. Ҫаплах тӑвас пулаҭ шӗкӗн те. Уншӑн та ула кайӑкран хӑтӑлма урӑх май ҫук, пулас та ҫук.

Çаккăн пек, вăйĕсем тан мар ђĕрĕ йапаласем хушшинђи, тавлашу тĕнђере ытларах пулаť. Сăмахран, шутласа тухарха—арăсланран пуçласа пăсарана çитеђђен тăвата уралла йун тăкакан тискер кайăксене! Вĕсенђен кашни харпăр хăй ĕмĕрĕнђе хăйсем пекех тăвата уралла, анђах хăйсенђен вăйсăртарах, йе кунĕрех ђĕрĕ йапаласен, тата вĕçен кайăксен ĕмĕтне мĕн ђухлĕ татнă-ши? Астуса илер-ха тата тĕнђене тултарса тăракан вĕçен тискер кайăксене: ăмăрт кайăка, хăлата, ўхĕне, хурђкана тата ыттисене те. Мĕн ђухлĕ мулкађă, кролик, шăши (кушак кайăкĕ), тата вак-тĕвек вĕçен кайăк пĕтереççĕ-ши вĕсем хăйсен ĕмĕрĕсенђе? Суса тухăр-ха тата шывра пурăнакан тискер кайăксене (пулăсене)! Аван-ши вĕсемпе пурăнма вак-тĕвек пулăсене? Вĕсенђен нумайăшĕ шултăрарах пулăсен апађĕ пулмаççĕ-ши? Татах мĕн ђухлĕ кайăк, çĕлен, калта хурт-кăпшăнкăпа тăранса пурăнаť! Йулашкинђен тата хурт-кăпшанкă хăй пек хурт-кăпшанкăнах мĕн ђухлĕ пĕтерет. Калани пур те çут çанталăкра, ура йарса пусмассерен, вăйлă ђĕрĕ йапалапа вăйсăрри хушшинђе вăрçă (тавлашу) татăлмасăр тăнине кăтартаť. Вăйлисем хырăмсене тăрантарас шухăшпа пĕр май вăйсăртараххисене тапăнаççĕ. Вăйсăррисем те ирĕккĕнех тăшманăн апађĕ пуласшăн мар: вăрçса тапăçса хăтăлма тăрăшаççĕ; вăй çитмелле мар пулсан, тăшмантан пытанаççĕ, йе унпа тĕл пуласран сыхланаççĕ, йе тата тĕрлĕ майпа хăйсенђен сивĕтме тăрăшаççĕ. Тĕрĕс шутласан, калани пур те хăйне йевĕрлĕ вăрçă, ăна тума та сахал вăй кирлĕ мар.

Анђах пурăнăçшăн кĕрмешни малта каланипех пĕтмест. Пурăнăç вăл ытлашшипех канçĕр, мартаклă йапала, çавăнпауншăн пулакан кĕрмешў те тĕрлĕ ђĕрĕ йапаласем хушшинђе тĕрлĕ пулма пултараť.

Акă, тĕслĕх, пăрахăçа тухса йапăхнă ђеђек картине илер. Икĕ-виçĕ çул маларах анђах унта хитре ђеђексем кĕрнеклĕн ўснĕ. Вĕсем ĕçђен çыннăн аллисем пулăшнипе пит ђаплă пурăннă: хăйсен ђакăр тĕслĕ ђеђекĕсемпе тĕнђене илемлетнĕ, хăйсенђен тухакан ырă-тутлă шăршăна сывлăша сарнă. Халĕ вĕсене тĕрлĕрен çумлă курăк пусса илнĕ те, вĕсем пађах курăнмаççĕ. Çав йапаласем çинех тата пилĕк-ултă çул иртсен пăхсассăн, картара пађ урăх тумтир курăпăр: унта, ђеђексем вырăнĕнђе, çўллĕ вĕтрен анђах кашласа ларĕ. Çакăнта та пурăнăçшăн пулнă тавлашăва асăрхамастăри.

есӗр?—Картари аҌаш Ҍеҍексем хуҫи вӗсемшӗн тӑрӑшнӑ Ҍух ҫеҫ аван ӳснӗ, етем вӗсемшӗн тӑрӑшма пӑрахса ирӗккӗн ӳсме хӑварсанах, вӗсене тӑшмансем пусса илнӗ. АнҌах ҫумлӑ курӑксем хӳшшинҌе те вӑйлӑраххисем, Ҍӑтӑмлӑраххисем пур иккен. Йулашкинҍен, картари ҫӗре вӗсем анҍах йышӑннӑ. Куртӑри ӗнтӗ?—унта та (картара), ытти ҫӗрти пекех, ҫӗнтерекенӗсем те, ҫӗнтерӗннисем те пур. Картара та пурӑнӑҫ вӑрҫи пурри уҫӑ, виттӗр курӑнат.

Ҫакӑ вӑрҫӑран пушшех тӗлӗнмелле. Кунта ҫумлӑ курӑксем—хурҍка кролик ҫине, ула тӑпа шӗкӗ ҫине пӑрахӑннӑ пек пӑрахӑнман та, ҫапах та ҍеҍексем пӗтсе ларнӑ, мӗншӗн тесен вӗсене ҫумлӑ курӑк пуснӑ. Шутласан, йулашкисем мӗнпе те пулин вӑйлӑрах пулнӑ пулас.

Акӑ, йывӑҫ-курӑк хушшинҍе, ҍӗрӗ ҍунлӑ йапаласем хушшинҍи пек, вӑрҫӑ пулмалла пек те мар, анҍах вӑл пур, ӑна пытарма ҫук. Ку вӑрҫӑ ҫынна сисӗнмест, тата йун та тӑкмаст, ҫапах хӑй нумай йапалана пӗтерет. Мӗншӗн вӑрҫаҫҫӗши-ха кусем?—Тымар йамалли тӑпрашӑн, апатшӑн, шывпа сывлӑшшӑн тата ӑшӑпа хӗвел ҫуттишӗн вӑрҫаҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ тӗнҍере канлӗ, ним хуйхӑ-суйхӑсӑр пурӑнакан пӑҍах ҫук пулса тӑрат. Пур те пӗринҍен тепӗри ирттересшӗн—аванрах, канлӗрех пурӑнасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Вара вӗсенҍен кам пурӑнӑҫ тӑмашине ҫӗнтерет, тепӗр тӗслӗ каласан—кам уйартан, йӗпе-сапаран, сивӗпе ытлашши вӗрирен (шӑрӑхран) хӑрамаст; тӗрлӗрен хӑртакан, ҫӗртекен ҍире хирӗҫ хытӑ тӑма пултарат; выҍӑх-ҍӗрлӗхе парӑнмаст, мӗншӗн тесен вӗсенҍен хӑшӗ-пӗри ҫуралнӑ (шӑтнӑ) ҍухнех тӑшманпа вӑрҫма хатӗр ҫуралнӑ, ҫавӑ ҍӗрӗ йулат, ыттисем пур те пӗтсе лараҫҫӗ. Ҫапла калат Некли йатлӑ вӗреннӗ ҫын. Епӗр те: „унӑн сӑмахӗсем ҍӑн мар,“ теме пултараймастпӑр.

Каланинҍен—йывӑҫ-курӑк ҫимӗҫшӗн пӗр май вӑрҫни, тата тӗнҍенӗн вӑй-хӑваҍӗпе тавлашни те аван курӑнса тӑрат. Шатлама сивӗ, ҫунтаракан шӑрӑх, ҫӗмӗрекен (ишӗлтерекен) ҫилсем, шалкам йе пӑрлӑ ҫӑмӑр кӳрекен тӑвӑлсем, пур те йывӑҫ-курӑка сийен нумай кӳреҫҫӗ. Кам малта шутласа (суса) тухнӑ тӗнҍе вӑй-хӑватне парӑнмаст, вӑл пурӑнат; кам хирӗҫ тӑраймаст, йе ҍӑтаймаст, вӑл пӗтсе ларат. Асӑннӑ пахҍари ҍеҍексем те пурӑнӑҫ йавӑрлӑхне ҍӑтайман та, пӗтсе ларнӑ. Ҫумлӑ курӑксене—вӗри шӑрӑх, ҫӑмӑрсӑр типӗ ҫанталӑк, сивӗ, тата хушӑран апат ҫитменни те нимех те тӑвайман. Ҫавӑнпа

вĕсем пурăнăç вăрçинђен çĕнтерÿллĕ тухса малалла пурăнма йулнă.

Некли йатлă вĕреннĕ çыннăн сăмахĕсем, кăтартнă инкек-синкекрен пуçне, урăхĕсенђен те упранма хушаççĕ. Вăл каланинђен—йывăç-курăкăн выђăх-ђĕрлехрен сыхланма кирли аван курăнат, мĕншĕн тесен вĕсен хушшинђе йывăç-курăкăн тăшманĕ те сахал мар. Çĕр çаврашки çинђе минуттă хушшинђе темĕн ђухлĕ курăк йевĕрлĕ çеçке, хунав турат, çулçă, кăђкă, çимĕç (улма), тата вăрлăх ђĕрĕ ђун хырăмне апат пулса кĕрсе пĕтет. Çапла, пĕр йапаланăн пурăнăçĕ, сывлăхĕ тата вăй-хăвађĕ те тăтăшах тепĕр йапала пĕтнинђен, вилнинђен килет. Калани вăрçă мари-ха ĕнтĕ? Кам ăна: „вăрçă,“ темĕ.

---

III.

## Тăван çине тăван.

Тĕнђе çине тĕплĕрех пăхса ăна сăнаса вĕреннĕ хушăра, вĕреннĕ çынсем, етем асăрхаман вырăнта тĕнђери йапаласем хушшинђе пÿлакан вăрçă пит нумай тĕл пулнă. Çав вăрçăра пĕрисем çĕнтереççĕ, теприсем парăнаççĕ. Сăмахран, çапла тĕслĕх илĕпĕр: пĕр вăрмана кашкăрсен кĕтĕвĕ вырнаçнă. Пăхсан, вĕсем пур те пĕр йăхри ђĕрĕ ђунсем; тĕрĕсрех каласан—пур те пĕр тăван; çитменнине апат та вĕсене пурне те пĕр тĕслĕ кирлĕ. Вăрманта апат йышлă вăхăтра кашкăрсем пĕрне пĕри пурăнма кансĕрлемеççĕ. Анђах апла-и-ха вăл апат çук ђух?—Çук, апла мар! Акă хĕллехи шатлама сивĕсем çитеççĕ. Кашкăрсен вăрманта апат çывхарса пырат. Тепĕр ђух выçмалла та пулат. Вара кашкăрсем, малтан тепле килĕштерсе пурăннă пулсан та, пĕри тепĕриншĕн тăшман пулса тăраççĕ. Вăрманта—йе пĕререн, йе ушкăнăн апат шыраса ђупма тытăнаççĕ. Кашни, мĕн те пулин тытса çисе ђĕре сыпас шухăшпа, хăйĕн мĕн пур çивĕђлĕхне, вăй-хăватне тата ђейелĕхне ĕçе кÿртет. Анђах çав хушăра та пĕри телейлĕ, тепĕри телейсĕр пулма пултараççĕ. Пĕрне мĕн ђухлĕ апат ытларах тивет, тепĕрне çавăн ђухлĕ сахалтарах лекет. Çакăн пек ђух икĕ кашкăр пĕрне пĕри курма мар, тĕл те пулмаççĕ, çапах та хăйсем пĕри тепĕришĕн тăшман пулаççĕ, мĕншĕн тесен иккĕшĕ те выçă, иккĕшĕ те пĕр тĕслĕ апат шыраççĕ.

Çапла ђух пĕрне пĕри курман йапаласем хушшинђе вăрттăн çилĕ тăрат̆. Тата çав вăхăтра пĕрне пĕри тĕл пулсан, вĕсем хушшинђе—„вăрçă пулмĕ,“ тесе калама та йăвăр. Ун пек ђух тăван çине тăван та тăма пултарат̆, анђах çиленнипе мар, выçăпа касăлнă хырăма мĕнпе те пулин тултарса ђĕрĕ йулас шухăшпа çех. Акă куртăр ĕнтĕ: вăрçă тискер кайăкпа вăл тытса çийес йапаласем хушшинђе çех мар, пĕр пек йапаласем, тепĕр тĕслĕ каласан, тăванпа тăван хушшинђе те пулма пултарат̆.

Кун уммĕхни сыпăкра епĕр, етем алли пыма пăрахнă пирки, çумлă курăкпа тавлашма пултараймасăр пĕтнĕ пахђари ђеђексене куртăмăр. Тата пĕр йышши çумлă курăксемех вăйлăраххисемпе тавлашма пултараймасăр пĕтсе ларни те пирĕн куç умĕнђех тăрат̆. Ку вăрçă тĕрлĕ курăксем хушшинђе пулат̆. Малалла епĕр пĕртăван курăксем хушшинђи тавлашăва илсе пăхăпăр. Кусем хушшинђи тăвлашу самай уйрăм пулĕ.

Акă пирĕн умра йӳç кăшман лартнă йăран. Йăран çинђи тăпра 200 кăшманран ытла нийепле те ӳстерме пултараймаст̆, анђах пахђаçă йăран çине 400 вăрă акнă. Вĕсем пур те шăтса тухсан, йăран симĕс кĕççепе витнĕ пек пулмалла. Анђах усă пулĕ-и кĕççе пек симĕс йăранран? Кулăшла пулмĕ-и, шăтса тухнă кăшмансем пур те çитĕнсе, çурăлса вăрă тăвĕç? тесен.—Ђăнах та кулăшла пулĕ, мĕншĕн тесен нумайĕшĕ, вăрă ăшĕнђен тухса хĕвел çутти курсанах, шанса лармалла. Теприсем тен темиçе кун пурăнĕçĕ, анђах вĕсем те, апатпа нӳрĕк сахалран, типсе ларĕçĕ. Çапла пĕтĕм йăран çинђе те—тăпра ăшне айаларах пулнă, тымарĕсене тарăнрах йарса вырăн ытларах йышăннисем анђах ӳсме йулĕç.

Куртăри ĕнтĕ?—Кăшман йăранĕ, шăтса тухнă кăшман калђишĕн, вăрçă вырăнĕ пулса тăђĕ! Çуралнă, шăтса тухнă кунранах вĕсем апатшăн кĕрешме тытăнђĕç. Çав кĕрмешӳре хăшĕ çийеле тухса пурăнма йулĕ, вăл пиçсе вăрлăх парĕ. Тепĕрисем, пурăнма кирлĕ йапаласене вăрçса илеймесĕр, шурăхса типсе ларĕç.

Вăрçă кунта та—пĕр тĕслĕ, пĕр йăхлă йапаласем хушшинђе кашкăрсем хушшинђи пекех; кунта та пурăнас ĕмĕтшĕн тăванпа тăван тавлашат̆. Пахђаçă йăран çине 400 пĕрђĕ тĕрлĕ курăк вăрри пăрахнă (акнă) пулсассăн, вĕсем хушшинђе тавлашу вăйлах пулас çук, мĕншĕн тесен вĕсене пурне

те пӗр тӗслӗ апат кирлӗ мар, тата тымарӗсем те вӗсен тӗрлӗ тарӑнӑшӗнђе—пӗрисем айаларахра, тепӗрисем ҫийелерехре пулмалла. Ҫапла пулнӑ пулсан, шӑтса тухнӑ ҫеҫкесен пурӑнӑҫра кирлӗ йапаласемшӗн питех те тавлашмалла пулас ҫук, мӗншӗн тесен вӗсем пӗрне-пӗри сахалтарах кансӗрлӗђђӗҫ.

---

IV.

## Вӑрҫӑ мӗн пирки тухат̆.

Пур ђӗрӗ йяпала та хӑй пек йапала ҫуратса ӗрђеме пултарат̆. Нумайӗшӗ вӗсенђен ытлӑшшипех хунтӑллӑ (ӗрђевлӗ). Анђах пуринђен те хунтӑллӑраххи хурт-кӑпшанкӑ: шӑна, вӑрӑм туна, саранђђа тата урӑхӗсем те. Тӗслӗх аша хуртлантаракан хура шӑнана илер. Вӑл ҫу каҫађђен вунӑ пин ҫӑмарта ытла хурат̆. Ҫав ҫӑмартасенђен ҫурри ҫех ҫитӗнсе шӑна пулсан та, ҫу каҫађђен унӑн ађисенђен темиҫе пинлӗ ҫар пулма пултарат̆. Тата ҫӗнӗрен ҫитӗннӗ шӑнасенђен ҫурри ама пулма пултарат̆. Ҫитӗнсе ҫитсен, вӗсенђен кашни каллех темиҫе пин ҫӑмарта тӑват̆. Пӗр ушкӑн (партти) хунӑ ҫӑмартасенђен икӗ ерне хушшинђе каллех ҫитӗнсе ҫӗнӗ партти пулат̆. Акӑ, шутласа кӑлар ӗнтӗ шӑнасене! Ҫапла, ҫуралнӑ шӑнасем пур те тӗрӗс-тӗкел пурӑнсан, темиҫе уйӑх иртнӗ ҫӗре (вӑхӑта) пӗр шӑнанӑн йӑхӗ темиҫе миллиона ҫитме пултарат̆.

Тӗслӗх тата урӑх йапала илӗпӗр. Есӗр тырӑ-пулӑна кишеклесе пӗтерекен уйри шӑшисене (кушак кайӑкӗсене) пур те аван пӗлеттӗр. Шӑшисен кашни мӑшӑрӗ ҫулталӑк хушшинђе 6—10 хут ҫурӑ ҫурлат̆. Ҫав ҫурӑсем, икӗ уйӑх иртсен, хӑйсем ҫурӑ тума пултараҫҫӗ. Асӑрхӑр-ха ӗнтӗ, пӗр мӑшӑр шӑширен пӗр-икӗ ҫул хушшинђе миҫе шӑши пулма пултарат̆. Шутласан, 15—20 пинрен кайа та пулас ҫук.

Хушӑнас (ӗрђес) йенђен тӗрлӗ йӑвӑҫ-курӑк та кайах йулмаст̆. Акӑ сӑмахран сар-ђеђеке*) (отуванђђик) илер. Кашни сар ђеђек ҫу хушшинђе 50 вӑрӑ йахӑн парат̆. Ҫав алӑ пӗрђӗ вӑрӑран 20-мӗшӗ анђах шӑтсан та, унӑн ҫулталӑкран ҫирӗм ҫеҫке пулат̆. Ађисем ҫулталӑкран каллех 20-шер сар-ђеђек кӳмелле ... Ҫапла икӗ ҫултан сар-ђеђекӗн шуђӗ 400-ре ҫитме

---

*) Сар-ђеђекӗн туниђен хӗр ађасем хулха ҫакки тӑваҫҫӗ.

пултарать. Йулашкинђен, ҫав тăвата ҫěр сар-ђеђек каллех 20-шер (сар-ђеђек) ўстерсен?—Сакăр пине ҫитсе перěнет вěт вěсен шуђě? Ҫапла пěр сар-ђеђекрен виҫě ҫул хушшинђе сакăр пин пулса тăма пултарать. Шырасан, кунашкал тěслěх епěр темěн ђухлě те тупăпăр. Анђах шыраса вăхăт иртерме тăратě-и?—Тăмастě. Ђěрě тěслěхсемшěн те инҫех кайма кирлě мар.

Христофор Колумпа епěр пур те пěлетпěр. Вăл, Америке иккěмěш хут кайсан, Сан-Томинко йатлă вырăнта мăйракаллă, хура тěслě шултăра выђăх мěн пурě те темиҫе ҫех хăварнă. Ҫав выђăх вăл хăварнă вырăнта тискерленсе пит ђас ěрђесе кайнă: 27 ҫултан Сан-Томинко таврашěнђе мăйракаллă шултăра выђăх пысăк кěтěвěн ҫўренě; кашни кěтўре выђăх пуҫě тăваттăран пуҫласаултă пине ҫитнě. Ҫакна майлах Ҫěнě Ҫелантийěн*) хăш вырăнěсенђе килти сыснасем тискерленсе йышлăланнă. Ытлашши нумайах та пулмасть, ҫав ҫěр ҫинђе сыснасем пађах пулман. Анђах халěтерех пěр вырăнта, 20 уйăх хушшинђе, 25 пин хир сысни вěлернě. Ҫакă ђыхвăр сыснасем йепле хунама пултарнине пит те аван кăтартать.

Тата ҫав, Ҫěнě Ҫелантирех, ěлěк кăшкарути пађах пулман. Халě кăшкарути ҫěре ҫěршер теҫеттинěн, хěрлě кěҫепе витнě пек, витсе тăрать. Вырăнăн, ытти ўсекен ҫеҫкесене пусса илсе, тырă-пулă тăвас ěҫе те ђăрмантарма пăхать. (Кăна Уоллес калать).

Малта илсе пахаланă тěслěхсем тěрлěрен ђěрě ђунлă йапалапа йывăҫ-курăк (ҫеҫке), ҫителěклě вырăн тата апат та пулсан, хăвăрт ěрђеме пултарнине пит аван кăтартаҫҫě.

Шутласа пăхăрха ěнтě: ҫěр пиђě ҫинђе, т. т. к. ҫěр ђăмăрě ҫинђе миҫе ђěрě ђун саланнă? Ҫут ҫанталăкра пěр минуттăра миҫе ђěрě ђун, тата йывăҫ-курăк ҫуралать! Вěсем пур те пурăнасшăн, пурăннă ђух ҫителěклě апат ҫийесшěн, тата хăйсем хыҫҫăн йăх та хăварасшăн. Каланипе пěрле ђěлхе ҫине ирěксěр ҫапла ыйту ҫавăрăнса килет: пурне те вěсене ҫěр пиђě тăрантарса, пăхса ўстерě-и? Кашни кун миллионăн ҫуралакан тěнђери мěн пур ђěрě ђунсемпе ҫеҫкесем валли ҫěр ҫинђе вырăн ҫитě-и?—Ку ыйтусене хирěҫ ҫапла анђах калама май пур: тěнђере пěр кěтес те пулин йышăнасшăн

*) „Ҫěнě Ҫеланти“ тесе Австралирен хěвел тухăҫнелле выртакан Асла оккеанăн варринђи икě отăва калаҫҫě.

пĕтĕм вăйран тавлашакансем пур те ђĕрĕ йулсан, темиçе çул хушшинђе тĕнђере пĕрре пусмаллăх вырăн та пушă йулас çук; ăна кам та пулин—ђĕрĕ ђун. йе çеçке йышăнмалла. Анђах апла пулма пултараймаст. Çĕрĕн ырăлăхĕ тем тĕрлĕ пĕтми пулсан та, тата вăл хăйĕн ађи-пăђишĕн темĕн ђухлĕ хыпса çунсан та, пурăнасшăн макăракансене мĕн кирлине парса çитерейес çук. Тĕнђе пур таран анђах пама пултарат. Сăмахран калăпăр: тăваткал ђалăш çаран (çерем) хăйне тивĕçлĕ курăка анђах апат пама пултарат. Тăваткал ђалăш çинђе ӳсекен курăк та çулçисемпе, йе вăррисемпе виçеллĕ шутлă ђĕрĕ ђуна çеç апат парса тутă усрама пултарат. Йулашкинђен. курăкпа. йе вăрăпа тăранса пурăнакан ђĕрĕ ђунлă йапаласем те хăйсем шутĕнђен хăйсене тивĕçлĕ тискер ђĕрĕ ђунсене çеç тутă усрама пултараççĕ. Çапла тăваткал ђалăш çаран çинђи пурăнăç пĕтĕм çĕр çинђи пурăнăçран нимĕнпе те уйрăм мар; вырăн унта та, кунта та виçеллĕ шутлă йапала валли çеç. Анђах çуралакансен шуђĕ йышлăрах, вăл тĕнђе паракан апатпа шутланмаст. Çавăн пирки пĕтĕм çĕр ђăмăрĕ çинђе пурăнăçшăн пĕр май вăрçă тăрат

Тепĕр ђух пурăнăç вăрçи тата тĕлĕнмеллейĕн палăрат. Вăл тĕрлĕ ђĕрĕ йапаласем хушшинђи пурăнăçа шăлт хăй майлă çавăрат. Акă нумай шутламасăр-тумасăр икĕ тĕслĕх илĕпĕр. Есĕр „лосоç“ йатлă пулăна пур те пĕлеттĕр. Вĕсем тинĕсре пурăнаççĕ. Анђах вăлђĕ йанă вăхăтра, çулталăкра пĕрре, тинĕсрен йухан шыва вăлђă пăрахма хăпараççĕ. Çав хушăра вĕсенђен нумайĕшĕ йухан шывлă çырмасенђе пурăнакан „вытрă“сен апађĕ пулса пĕтеççĕ. Кусенђен пуçне лосоççен урăх тăшмансем те пур Вĕсем—тӳленсем. Тинĕсре тӳленсенђен лосоç пулă мĕн ђухлĕ нумай пĕтет, çавăн ђул вăл çырмасене сахал хăпарат. Лосоççен тинĕсре нумай пĕтни тепĕр çыншăн тен никама та сийен кӳмен пек туйăнĕ, анђах ĕçре апла мар: лосоççем йухан шыв çырмасене сахал хăпарни вытрăсен апатне сахаллатат. Вара вытрăсен ирĕксĕрех çырма çывăхĕнђе пурăнакан кайăксемпе, йе урăх вĕтĕ, ђĕрĕђунлă йапаласемпе тăранмалла пулса тăрат. Çапла хăш-хăш вĕçен кайăксен, тата çĕр çинђи ытти ђĕрĕ ђунсен пурăнас ĕмĕђĕ тăтăшах таçта, айăкра пурăнакан лосоççен шуђĕ катăлнипе кăтăлманнинђен килме пултарат. Лосоç пулă вытрă аллине мĕн ђухлĕ нумай лекет, çавăн ђухлĕ, пулă çук ђух, вытрăсем çийекен апат (кайăк-кĕшĕк) сахал пĕтет.

Тепӗр тӗслӗх (пример) тата тӗлӗнмеллерех. Акӑ кушакпа „хӗрлӗ ђавка-пуҫӗ“ тейекен курӑка илӗпӗр. Шухӑшласан, кусем хушшинђе ним ҫыпӑҫу та, т. к. пару-илӳ те пулмалла пек мар. Анђах кунта та пур. Епӗр ӑна малалла курӑпӑр.

Хӗрлӗ ђавка-пуҫӗ (клевер), ытти ҫеҫкесем пекех, арҫын йӑхлӑ ђеђек ҫинђи тусан хӗрарӑм йӑхлӑ ђеђек ҫине лекмесен, шӑркана ларса вӑрӑ тӑвайманст*).

Нумай ҫеҫкенӗн тусанӗ пӗр ђеђек ҫинђен тепӗр ђеђек ҫине ҫилпе куҫать. Анђах хӗрлӗ ђавка-пуҫӗн тусанне тӗклӗ-тура (шмель) ҫеҫ куҫарма пултарать. Вӑл акӑ мӗнрен паллӑ: тӗклӗ-тура нумай вырӑнта хӗрлӗ ђавка-пуҫӗ ӗнсе пулать (ӳсет), тата вӑрӑ та пит нумай парать; тӗклӗ-тура пађ ҫук вырӑнсенђе хӗрлӗ ђавка-пуҫӗ ӗнеймест. Акӑ ӗнтӗ, малта каланинђен, хӗрлӗ ђавка-пуҫӗ аван, йе нађар пуласси тӗклӗ-турасенђен килни пит аван курӑнать. Анђах ҫав тери усаллӑ тӗклӗ-турасен те тӑшманӗсем пур. Вӗсен йӑвисене пылшӑн шӑшисем нумай пӗтерессӗ. Шӑшисен хӑйсен мӑйӗпе каллех пит хӑрушӑ тӑшман—кушак пур. Халӗ ӗнтӗ хӗрлӗ ђавка-пуҫӗпе кушак хушшинђе мӗн ҫыпӑҫу пуррине есӗр хӑвӑрах сисрӗр пулӗ. Ҫапла, асра тытман кушак ҫеҫкесен „инттересне“ сыхлать. Йулашкинђен, пӗтӗм малта каланинђен акӑ мӗн курӑнать: ӑҫта кушак нумай, унта шӑши ытлашши хунаймасть, ӑҫта шӑши сахал, унта тӗклӗ-турасем ытларах. Ҫавӑнпа ун пек вырӑнта хӗрлӗ ђавка-пуҫӗ те аван ҫитӗнсе вӑрӑ нумай кӳрет.

Кураттӑра, кушаксем—кӗтмен, ӗмӗтленмен вырӑнтан хӗрлӗ ђавка-пуҫӗсен савнӑ йултӑшӗсем, тусӗсем пулса тӑраҫҫӗ! Пурӑнӑҫ ҫине тӗплӗрех пӑхсан, ђӑнах та вӑл пуҫа ҫӗмӗрекен йапала иккен.

---

## V.

## Тӑшмансемпе ђикӗнсе ҫапӑҫмалли хатӗрсем.

Камӑн апат-ҫимӗҫе пӗр май вӑрҫӑпа шырамалла, унӑн вӑл ӗҫе тума тивӗҫлӗ хатӗр пулмалла. Вӑрҫӑра йун тӑкмалла пулсан, вӑрҫӑн хатӗрӗ те ӑна тума тивӗҫлӗ пулас пулать.

---

*) Хӗресле шӑрка ларни ҫинђен малалла илӗх, йе „Симӗс патшалӑх“ йатлӑ Лункевиђ ҫырнӑ кӗнекене вулла.

Шутласа каларма та çук нумай—тăватă уораллă, тĕклĕ (вĕçен кайăк), тата хупăллă (пуллă) тĕрлĕ тискер кайăксене пăхса тухарха!



1-мĕш ўкерђĕк.—Арăсланăн пытанакан ђĕрни.

Акă сирĕн умра вĕçе-вĕçĕн тĕнђе йун тăкма пултарнă тискер кайăксем тăраççĕ. Вĕсем—арăслансем, тихăрсемпе кашкăрсем, ăмăрт кайăксем, хăлатсемпе хурђкасем, кроккотилсемпе сăхакан çĕленсем, аккулăсемпе çăрттансем, скорппионсем, таранттулăсем тата урăхĕсем те. Вĕсене, пурне, шутласа та каларайăс çук. Тĕнђе вĕсене пурне те тĕлĕнмелле хăватлă вăрçă хатĕрĕсем панă. Мĕн ђухлĕ йун тăкаççĕ-ши вĕсем хăйсен ĕмĕрĕсенђе?

Тăватă уораллă тискер кайăк—пит хăйуллă, виттĕр куракан куçлă, çивĕђ шăллă пулмалла; вăл вĕçен-кайăк пулсан—унăн сăмси çеклĕллĕ кукăр пулмалла. Сăмахран пăхăрха арăслан çине!



2-мĕш ўкерђĕк.—Сăхакан, çĕленĕн, Катуккăн, шăлĕ.

Унăн вăй-хăватне кĕлеткийĕх (тумех) аван кăтартать. Унăн çăварĕ пит çивĕђĕ шăлсемпе тулли. Хăватлă урисен вĕçĕсенђе пытанакан (кирлĕ ђух çеç ђăсăлакан) ђĕрнесем пур (3-мĕш ўкер.), тата куçĕсенђе те нихăçан та пĕтми вăй курăнать. Çав тери вăйлă, тата ђăрсăрскер вăл кашни минуттăра вăрçăна тухса аллине лекнĕ ђĕрĕ ђуна лăђăркаса çех пăрахма, тăшмана çĕнтерме йалан хатĕр тăрать. Вăйран-хăватран вĕçен кайăксен патши, ăмăрт-кайăк та, арăсланран кайа мар. Унăн çивĕђĕ ђĕрнисенђен мулкађă та, пытек те, тата çивĕђ уораллă хир кађаки те хăтăлма пултараймаççĕ. Тата унăн хурçă пек хытă сăмсийĕ ђĕлхесĕр ђĕрĕ ђунсенне çех мар, тепĕр ђух етемĕнне те сехрине хăпартать. Çав тери хăватлă, тата ђăрсăр вăрçă паттăрĕсемпе



3-мĕш ўкерђĕк.—Скорппион.

(арăсланпа ăмăрт-кайăкпа) вăйран танашма пултаракан пит сайра. Анђах, апла пулсан та, вĕсен усал ĕçĕ ĕмĕтсĕр аккулăсемпе хайар çĕленсенђен ытлашши мар. Пăхăрха, сăмахран, аккулăн пит те сарлака çăварне!

Мĕн ђухлĕ вырнаçса тăрат унта киншал пек çивĕђĕ шăл? Курсан тĕлĕнсе каймалла. Вăл вĕсемпе çăварне лекнĕ ђĕрĕ ђуна пĕрре çыртса ватса тăкат. Сăхсан вĕлерекен çĕленĕн те çăварĕ пит çирĕп, çивĕђ шăлсемпе тулли тăрат. Тата кунпах те çитмен: çĕленĕн кашни шăлĕн тунинђе вĕлерекен емел пур. Вăл емел шăл туни çумĕнђи пĕђĕк çеç хутаçра пулат. Çĕлен (гадюка) малтан хăйĕн аллине лекнĕ ђĕрĕ ђуна



4-мĕш ўкер. Сăхсан вĕлерекен ерешмен. Ерешменĕн йанах шăммисем. Пĕр йанах шăмми вĕлерекен емел хутаçĕпе

çивĕђĕ шăлĕсемпе çыртса суран тăват, хыççăн суран пулнă вырăна шăл тунинђи хутаçран емел йарат. Емелĕ шăл тунисенђе пур пĕђĕкçеççĕ каналсем тăрăх йухса анат. Сурана лекнĕ емел йунпа хутшăнса ўте сарăлсанах ђĕрĕ ђун вилет.

Сăхса, çыртса вĕлерекен хатĕрлĕ ђĕрĕ ђунсем çĕленпех пĕтмеççĕ, тата пур. Вĕсем: скорппионсем, ерешменсем, сăпсасем тата урăхĕсем те. Скорппион текенни аллине лекнĕ парнене, ђĕрĕ ђуна, малтан хўри вĕçĕнђи çеклĕллĕ сăнăпа ђиксе суранлат, унтан хўри вĕçĕнђех пур емеле сурана тумлатат (йарат). Вара сурана емел лекнĕ ђĕрĕ-ђун сайра çех вилмесĕр йулат. Африккăра пурăнакан скорппионсен емелĕ çынна та вĕлерме пултарат.

Пăртак урăхларах ĕçлеççĕ ку тĕлĕшрен сăхакан ерешменсем. Вĕсем хăйсен парнисене тути вĕçĕнђе пур майракасемпе сăхаççĕ. Ерешменсем те, сăхса суран тунă вырăна йарсан, вĕлерекен емел пур. Вăл емел ерешменсем йанах шăммисен пуçламăшĕнђе (кутĕнђе) пухăнса тăрат̆. Кирлĕ пулсан, çыртса тунă суран çине йанах шăммисем тăрăх анат̆.



5-мĕш ӳкер.—Скорпионпа пихоркка*) хушшинђи вăрçă.

Сăхсан вĕлерекен сăпсасен вăрçă хатĕрĕ каллех урăхларах. Кусен сăнни хырăмĕн йулашки кăшăл вĕçĕнђе пытарăнса тăрат̆. Хырăмĕнђе вĕлерекен емеле тăвакан „шелесăсемпе“ пĕђĕк трупаллă икĕ хăмпă пур. Вĕлерекен емел малтан çав хăмпăна пухăнат̆; кирлĕ пулсан канал (трупа) тăрăх сăнă вĕçне йухса анат̆. Йантăна йуратакан сăпса тăшманран хăйне хăтарнă ђух, йе аллине лекнĕ парнене тирпеленĕ ђух, малтан сăннипе сăхса суран тăват̆, унтан суран çине пĕр тумлам емел тумлатат̆. Суранри йуна лекнĕ емел ӳте пит хытă ыраттарат̆. Тата тепĕр ђух ыратнипех те çитмест: вăйсăртарах, йе пĕђĕкрех ђĕрĕ ђун унран вилме те пултарат̆.

---

*) Пихоркка—ерешмен йевĕрлĕ хурт-кăшанкă.

Ытти тӗслӗ вăрçă хатӗрӗсем çинђен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа тăмастăп: вӗсем пит нумай, вӗсене шутласа та кăларас çук. Анђах тата икӗ хатӗр çинђен пӗртте каламасăр нийепле те иртме май çук.

Курнă та пулӗ есӗр носсорок йатлă ђӗрӗ ђуна. Унăн мăйракисем ытти тăвата уралла ђӗрӗ ђунăн пек пус çинђе мар, сăмси çийӗнђе ӳсеççӗ. Шутласан, унран такам та хăрамалла пек, анђах ăна хăратакансем те пур; тепӗр ђух уншăн та хăрушă вăхăт килет. Çавăн пек ђух вара вăл хăйӗн сăмси çийӗнђи мăйракипе çеç тăшманран хăтăлат. Носсороксем тата икӗ мăйракаллисем пулаççӗ. Çиленнӗ вăхăтра вӗсем такамшăн та хăрушă йапала. Мăйракисем пӗр çыннăн сехрине хăпартма пултараççӗ. Тата вӗсен кӗлеткийӗн капӗ, вăй-хăвађӗ кама хăратмӗ! Вӗсем тӗнђере пурăнакан тăвата уралла шултăра ђӗрӗ ђунсенђен ђи маттуррисем. Нушасăр носсорокпа никам та кӗрешме тухас çук.



6-мӗш ӳкер.—Икӗ мăйракаллă носсорокăн пуçӗ.



7-мӗш ӳкер.—Похомолсем.

Çакна майлă йапалах хурт-кăпшанкă йăхӗнђе те пур. Ăна вырăсла: „богомол“*), теççӗ. Унăн пӗвӗ-çийӗ çине пăхсассăн, такам та ăна: ниме киресӗр, тӗссӗр йапала, темелле. Похомол—илемсӗр пысăк шампа хырăмлă шăрђăк, анђах

*) Богомол—шăрђăк майлă хурт-кăпшанкă.

унӑн пуҫӗ те пӗђӗк мар; йанахӗн шӑммисем шӗвӗр, кӑккӑрӗ (мӑйӗ) страусӑн*) пек вӑрӑм; малти урисем, хӑйӗнђен шутласан, каллех ытлашши пысӑк, тата вӑрӑм. Кӗскенӗн каласан: ним илемӗ те ҫук. Кӗлеткийӗн пӗр пайӗ тепӗринпе нийепле те ҫураҫмаст̆. Турат ҫинђе пуҫне ҫӳлелле тытса, тата малти вӑрӑм, ик-виҫ хуҫӑклӑ урисене кӑккӑрӗ ҫумне хуҫлатса ларнӑ ђух, похомол пит тӳлек, пуринпе те ҫураҫуллӑ пурӑнакан йапаланӑн курӑнма пултарат̆. Шутласан: ку шӑнана та кӳрентерес ҫук, теме пулат̆. Анђах каланӑ пек курӑнат̆ ҫеҫ: похомол шӑнасене ҫех мар, лӗпӗсене тата ытти хурт-кӑпшанкӑна та пит нумай пӗтерет. Хӑй, кӗлеткерен пӑхсан, ниме киресӗр пулсан та, ӗҫе пит ђас, хӑпӑл-хапӑл анђах туса хурат̆. Вӑ-—лӗпӗ, йе урӑх хурт-кӑпшанкӑ патне систермесӗр пырат̆ те, ӑна малти урисемпе йӑпӑр-йапӑр йарса илсе темиҫе пайа туртса та ђӗрет.

Ҫапла—тӗнђе унӑн урисене хӑйех ҫак ӗҫе тума майланӑ. Унӑн вӗтӗ шӑллӑ урисем, хуҫмалла ҫӗҫӗ пек, кирлӗ вӑхӑтра ђӑсӑлаҫҫӗ, кирлӗ мар пулсанах—пуҫтарӑнаҫҫӗ. Ҫав тӗрлӗ пурӑнӑҫ вӑрҫийӗн хатӗрӗсене курсассӑн, ирӗксӗрех ыйтас килет: малта шутласа (хисеплесе) тухнӑ ђӗрӗ йапаласенђен кам хӑрамалларах?—Ђӗрӗ ђунлӑ йапаласемшӗн—тӑватӑ ураллӑ пит пысӑк носсорок-и, йе хурт-кӑпшанкӑшӑн—похомол-и?

---

## VI.

## Тӑшманран сыхланасси.

Авалхи ҫынсем, вӑрҫӑна кайнӑ ђух, ҫийе тимӗр тумтир, пуҫа тимӗр калпак тӑхӑннӑ, тата алӑна тимӗртен тунӑ хӳтлӗх (щит) илнӗ. Хаљхи вӑхӑтра ӗнтӗ малта шутласа тухнӑ авалхи тумтирсемпе хӳтлӗхсем пӑрахӑҫа тухнӑ, вӗсене муҫейсенђе анђах курма пулат̆. Анђах ҫав йапаласем, етем хушшинђе пӑрахӑҫа тухнӑ пулсан та, ђӗрӗ ђунлӑ йапаласем хушшинђе халӗ те пур, ӗҫрен тухман. Вӗсем, тӑтӑшах, ҫав йапаласем пулӑшнипе ҫеҫ тӑшманран хӑтӑлаҫҫӗ. Акӑ сӑмахран тимӗршапана (черепаха) илӗпӗр. Унӑн кӗлетки пур йенђен те мӑйрака йышши йапалапа (панцырпа) витӗннӗ.

---

*) Страус—Африккӑ пушӑ хирӗнђе пурӑнакан вӗҫен-ђупан кайӑк.

Урисем, пуҫӗ тата хӯри пытаннӑ вырӑнсенҗе те пӗҗӗк ҫурӑксем ҫех курӑнаҫҫӗ. Вӗсем те хӑрушӑ вӑхӑтра пӗрлешсе лараҫҫӗ те, вара пытарӑннӑ йапаласене нийепле те курма ҫук. Тимӗр-шапанӑн вӑрҫӑ хатӗрӗ, тепӗр тӗслӗ каласан—тӑшмантан хӑтаракан, сыхлакан йапала тирӗнҗен пуҫне урӑх ҫук. Вӑл тӑшманран тарса хӑтӑлма пултараймасть, мӗншӗн тесен—пит лӯппер (неповоротливый); ҫӗр ҫинҗе утса анҗах ҫӯрет, җупма пултараймасть. Тата вӑл тӑшманпа ҫапӑҫма та пултараймасть, мӗншӗн тесен унӑн вӑрҫӑ хатӗрӗ ҫук. Ҫавӑнпа вӑл тӑшманран пуринҗен ытла пытанса хӑтӑлать. Анҗах тӑшманран пытанса, йе ҫийӗнҗи тумтирӗпе хӑтӑлакан тимӗр-шапа ҫех мар. Ун пеккисем тата пур.


8-мӗш ӳкер.—Тимӗр-шапа.

Акӑ есӗр рак хуранӗ тейекен йапалана пур те курнӑ. Унӑн ӑшӗнҗе темӗнскерле йӗпе җӗрӗ йапала (слизняк) пурӑнать. Тинӗсре вӗсем миллиношерӗн пурӑнаҫҫӗ, унта вӗсене ура йарса пусмассеренех тӗл пулма пулать. Анҗах вӗсенҗен нихӑшӗ те тӑшмана хирӗҫ вӑйпа тӑма пултараймасть, мӗншӗн тесен, тӗнҗе вӗсене ни ҫивӗҗ щӑлсем, ни ҫивӗҗ җӗрнесем паман. Ҫавӑнпа вӗсен ӗмӗрӗ тинӗс тӗпӗнҗи җулсен айӗнҗе пытанса пурӑнсах иртет. Ҫитменнине вӗсем тӑшманран тарса хӑтӑлма та пултараймаҫҫӗ, мӗншӗн тесен вырӑнтан вырӑна упаленсе ҫеҫ куҫма пултараҫҫӗ. Капла мӗн хӑтаратха ӗнтӗ вӗсене тӑшмансенҗен?—Ҫийӗнҗи хупӑ, рак хуранӗ, текен йапала.


9-мӗш ӳкер.—Икӗ рак хуранӗ.

Ҫапла—раксене, йе вӗсене йеверлӗ җӗрӗ йапаласене тӑшмансенҗен ҫирӗп хупӑ анҗах хӑтарса усрать. Ҫавӑнпа вӗсенҗен хӑшӗ пӗри ҫав хуранрах ӗмӗрӗсене иртереҫҫӗ; тӗнҗе ҫине тепле хутра пит кирлӗ (нуша) вӑхӑтра анҗах пӑхаҫҫӗ.

Пĕтĕм каланинђен акă мĕн курăнаť ĕнтĕ: йепле çурă тăвакан ђĕрĕ ђуна—çăм, вĕçен кайăка—тĕк, çĕлен-калтана тата пулăсене—хупă сивĕрен, йĕпе-сапаран, тата кĕтмен вăхăтра килекен суранран сыхлаť; çавăн пекех—раксене, ăна йевĕрлĕ урăх ђĕрĕ йапаласене, тата хăш хурт-кăпшанкăна та хăйсен çийĕнђи çирĕп хупă (тир) çанталăк улăшăнниниђен килекен инкек-синкекрен анђах мар, тепĕр ђух тăшманран та хăтараť. Каланине тата тĕплĕрех, авантарах пĕлес тесен, ђĕрĕппе тиккопраса*) илĕпĕр. Кусем иккĕшĕ те тĕрлĕ тăшманран



10-мĕш ўкер.—Тиккопрас.

хăйсен çийĕнђи йĕплĕ тирĕсемпе хăтăлаççĕ. Кам курман сирĕнтен ђĕрĕп йĕплĕ çăмха пулса выртнине?—Çав вăхăтра унăн ни урисем, ни тути-çăварĕ курăнмасť. Кам ĕнтĕ çав йĕплĕ çăмха патне нушасăр пырса перĕнĕ? Çавна майлă йапалах тиккопрас та; унăн йĕпĕсем çех вăрăмрах. Ђĕрĕппе тиккопрас çине пăхсан, такам та: кусем тĕнђе туса пĕтереймен телейсĕр ђĕрĕ ђунсем, тесе шухăшлĕ. Анђах çав тери илемсĕр тир вĕсемшĕн тепĕр ђух тепле ђипер йапаларан та хаклă тăраť, мĕншĕн тесен, тăтăшах вĕсене тăшманран хăтараť. Çав йĕплĕ хўтлĕх пулман пулсан, вĕсен йăхĕ çĕр çинђе такçанах пĕтмелле, мĕншĕн тесен, тăшман пусмăрĕнђен пĕтнĕ йапала тĕнђере пит нумай пулнă.

Проненостсă, тата йашђăр**) тейекен ђĕрĕ йапаласем те, вĕсен тирĕсем прођă текен çирĕп, мăйрака йышши

*) Дикобраз—ђĕрĕп пек шăртлă-йĕплĕ ђĕрĕ ђун.

**) Броненосецпа ящер—пулă хуппи майлă тимĕр пек хытă хупăпа витĕннĕ ђĕрĕ ђунсем. Вĕсем çурисене сĕтпе ўстереççĕ.

йапаларан пулнă, пулă хуппи пек, вĕтĕ çаврашкасемпе витĕнмен пулсан, çав майпах пĕтмелле. Вĕсен çиййĕсенђе çăм та, йĕп те çук, анђах вĕсем халĕ те пурăнаççĕ. Çав майрака йышши хупă йашђăрпа проненостса тепĕр ђух тăшманăн çивĕђĕ шăлĕсенђен те хăтарат. Тата вĕсем ђĕрĕппе тиккопрас пек çăмха (кăстăрмађ) пулма пултараççĕ. Çăмха пулма пултарни вĕсен урисемпе пуçĕсене тăшманран аван хăтарат.

Йашђăрпа проненостсăна малтанхи хут куракан нихăçан та: кусем çурă туса ађисене сĕтпе ўстерекен ђĕрĕ ђунсем, тесе калас çук. Анђах вĕсем ађисене (çурисене) хăйсен сĕђĕпе ўстереççĕ. Ђăн, вĕсем тĕнђе пултарнă малтанхи тĕсрен нумай улăшнă пулас, малтанах çав тери хытă хупăпа çуралнă, теме йавăр. Анђах вĕсен çийĕ пуçĕ (тирĕ) пурăнăçпа вăрçма улăшман пулсан, вĕсем çут-çанталăкра такçанах пулас çук. Вĕсене çак вăхăтђен çут-çанталăкра тимĕр пек хытă хупăллă тир анђах усрат.



11-мĕш ўкер.—Проненостсй.

Малалла епĕр кĕскенĕн те пулин хайар ђĕрĕ ђунлă йапаласен вăрçă хатĕрĕсемпе, вăйсăррисен тăшмана хирăç тăмалли хўтлĕхсем çинђен каласа парас тетпĕр.

Пĕртте манмалла мар: тĕнђе вăл тĕлĕшрен те пурне те пĕр пек туман. Пăрахăнакан (нападающие) тискер кайăксем хушшинђе пĕрисем тепĕрисенђен ţейерех, вăйлăрах тата маттуртарах та. Çавнашкалах сыхланаканĕсем хушшинђе те. Пĕрисем тăшманран пит аван, тепĕрисем нађартарах сыхланма пултараççĕ.

Тата акă мĕне асăрхамалла. Епĕр малта—тĕнђе пĕр йышши тискер кайăксене çирĕп, маттур пăрахăнмалла хатĕрсем, тепĕрисене сыхланмаллисене панă, терĕмĕр. Мĕне пĕлте-

рет-ха вăл: „тĕнђе панă,“ тенĕ халап? Мĕнле ăнланмалла вăл сăмахсене? Тепĕри тен—тискер кăйăксен халĕ пур вăрçă хатĕрĕсем ĕмĕртенех пулнă, тесе шутлĕ?—Çук, вĕсем ĕмĕртенпех вăл хатĕрсемпе пулман. Апла шутлакансем йăнăшаççĕ. Вăрçă хатĕрĕсем (ђĕрĕ ђунсен) кайарахпа, йеррипен çеç пулса пынă. Вĕсене вăрçăсемпе сыхланасси—хăй кăларса туса пынă. Ђăн, авалах çĕр çинђе халђхи вăхăтра пур ђĕрĕ ђун пур те пулман, тата çĕр çинђе те, шывра та халĕ пађ çук ђĕрĕ ђун та нумай пурăннă. Ун ђухне вăрçă хатĕрĕ те халђхи пек пулман; тĕрĕссипе каласан, халђхи пекки кирлĕ те пулман.

Акă вăхăтсем иртнĕ. Кивĕ самана çĕнĕ саманапа улăшса пынă. Çĕнĕ саманапа çĕнĕ ђĕрĕ ђун тухнă. Анђах кусен



12-мĕш ўкер.—Йашђăр.

вăрçă хатĕрĕсем те, йăлисем те малтанхисен пек пулман. Каллех—çул хыççăн çул, ĕмĕр хыççăн ĕмĕр иртсе пынă. Анђах вĕсемпе пĕрле вăрçă хатĕрĕ те улăшса, аванланса пынă. Ку мĕншĕн апла пулнине малалла пĕлĕпĕр. Унђђен сире манпа пĕрле вăрçăпа сых хатĕрĕсен склатне кĕрсе вĕсенђен хăшне пĕрне пăхма ђĕнетĕп. Сăмахран—ђĕрĕ ђунлă йапаласем тутă пулса хăйсем хыççăн йăх (ђĕпĕ-çурă) хăварасшăн мĕн ђухлĕ пурăнăç йухăмĕпе тавлашни çине пăхăпăр. Кунта пирĕн валли вĕренмелли те, тĕлĕнсе хытса алă çупмалли те нумай пулĕ.

VII.

## Тăшмансене сивĕтмелли йапаласем.

Тĕнђере (çут çанталăкра) ытлашши пысăк та мар помпартир*) йатлă нăрă пурăнат̆. Вăл хăйĕн тăшманне вăйпа çĕнтерме пултараймаст̆. Анђах тăшман аллине хăйне: „на“, тесех те памаст̆. Ăна йатне те çавна кура панă. Шултăрарах нăрăсем, хурт-кăпшанкă çийекен вĕçен кайăксем тата ытти ђĕрĕ (çурă тăвакан) ђунсем те ăна тытса çиме йаланах хăтĕр. Анђах помпартир хăйне тăшманран вăхăтра сыхласа илет. Вăл, çумне тăшман пырса перĕнсенех, хăйĕн хырăмĕнђе пур усал шăршăллă шыва тăшман çине кăларса йарат̆ те, айаккалла тарат̆. Тăшман, кирек кам пулсан та, çав шывăн шăршине тӳсеймест: нăрă хыççăн пĕриккĕ йарса пуссанах, хăвалама пăрахса айаккалла тарат̆, йе ăçта та пулин пытанма васкат̆.



13-мĕш ӳкер.—Нăрă (помпартир).

Хăйне помпартир майлă сыхлакан тепĕре ђĕрĕ ђунлă йапаласен хушшинђе пур. Вăл воњуђкă**) йатлă ђĕрĕ ђун. Воњуђкă Америкра пурăнат̆. Вăл катаранах паллă; ытлашши хăрамаст̆; етеме те, тискер кайăксене те хăй çывăхне йарат̆, анђах ăна тытса çийесшĕн ăмсанакан пит сахал. Çакна илтсен, ирĕксĕрех ыйтас килĕт: тискер кайăксене воњуђкă çумĕнђен кам, йе мĕн айăккалла хăвалат̆-ши? Мĕн пур унăн çумĕнђе? тесе.—Хирĕç акă мĕн калама йурат̆: воњуђкă хăйне тăшманран, помпартир пекех, пит усал шăршăллă шывпа хăтарат̆. Çав шывăн шăрши—çумне лекнĕ, сĕртĕннĕ йапалана çех мар, хăйĕн çывăхĕнђе пулнă йапалана та çапса йурăхсăр тăват̆. Сăмахран: ун çумĕнђе пулнă çимĕç çиме йурăхсăр пулат̆; унпа вараланнă тумтиртен икĕ-виçĕ ерне хушши ниме киресĕр çĕвек шăршă кĕрет, çитменнине, çусан та, ђас сӳрĕлмест. Çав шывăн тумламĕ, асăрхаман хушăран, куçа мĕне

*) „Бомбардир“ тесе çыртса, персе тăшмана аптăратакана калаççĕ.

**) Вонючка—сăсарпа пĕр йăх, пĕђĕкрех тата хитре ђĕрĕ ђун.

лексессĕн, çынна пађ (сĕм) куççăр тăваť. Интейтсăсем хушшинђе вăл шывран суккăр пулнă çын нумай, тет Уоллес. Куртăр-и ĕнтĕ, тĕнђе вођуђкăна хăйĕн пурăнăçне сыхлама йепле усал йапала панă!

Çапла сыхлаť хăйне тăшманран хăш ђĕрĕ ђун. Анђах урăх майпа сыхланаканĕсем те пур. Тепĕрисем тăшманран ашĕ çиме йурăхсăррипе хăтăлаççĕ. Ун пеккисем пуринђен ытла нăрăсемпе хуртсем хушшинђе нумай (уйар тата урăхĕсем те), анђах ђĕрĕ ђунлă йапаласем хушшинђе те çук мар. Çавнашкал ашлă йапаласене вĕçен-кайăксем те, шапасем те,



14-мĕш ўкерђĕк — Вођуђкă.

тата ытти ђĕрĕ ђунлă йапаласем те тĕкĕнмеççĕ, мĕншĕн тесен—вĕсем вĕсен ашĕ çиме йурăхсăррине малтанах пĕлеççĕ. Кам систерет-ха кăна вĕсене? Мĕнрен пĕлеççĕ вĕсем ăна?— Тулашĕнђен пăхса-курсах пĕлеççĕ, иккен.

Каллех, сăмахран, калăпăр: кам курман сирĕнтен пит хитре тĕслĕ хуртсене (гусениц)?—Тăтăш вĕсен тирĕ йăрăмлă хĕрлĕ, симĕс; пăнђăллă, йе шăпăђлĕ, тата хăшĕн шăртлă та пулаť. Нăрăсем хушшинђе те ђиперри пит нумай. Анђах çав хурт-кăпшанкă пур те тулашĕпе çех ђипер, ашĕ вĕсен çиме йурăхсăр: хăшĕн ним тути çук, тепĕрисенђен çăвара ђикмелле мар усал шăршă перет. Çаккăнта: „йăлтăртатакан

йапала пур те ылттӑн мар,“ тенӗ ваттисен халапӗ ирӗксӗрех аса килет. Вӑл халапа хурт-кӑпшанкӑпа тӑранса пурӑнакан ҫӗрӗ ҫунсем те пӗлеҫҫӗ иккен.

Пӗр, вӗреннипе ҫапа тухнӑ, Пелт йатлӑ ҫын Никарагуа йатлӑ вырӑнта (кӑнтӑрлари Америкра пӗҫӗк патшалӑх) нумай вӗтӗ шапа тӗл пулнӑ. Ҫав шапасем ытти шапасем ҫумӗнҫе пит ҫипер пулнӑ. Вӗсен йака тирӗ ҫакӑр хӗрлӗпе кӑвак тӗссене пӗр ҫӗре пуҫтарса илемленнӗ. Ҫав шапасем хурсемпе кӑвакалсем ҫӳрекен ҫаран ҫинҫе пӗр шикленмесӗр ҫӳренӗ: хур-кӑвакалсенҫен пӗри те вӗсене тӗкӗнмен. Ҫакна



15-мӗш ӳкерҫӗк.—Ҫакӑр тӗслӗ хитре хурт.

курсан, Пелт пит тӗлӗннӗ, мӗншӗн тесен, вӑл хур-кӑвакал шапасене ҫиме йуратнине пӗлнӗ. Ним тума аптӑранипе вӑл кӑвакалсемпе хурсене ҫав шапасем ҫине хӑвала, хӑвала кӳртнӗ. Анҫах вӗсенҫен нихӑшӗ те шапасене ҫимен. Ҫылайран тин пӗр кӑвакал ҫав илемлӗ, хитре шапасенҫен пӗрне ҫӑварне илсе хыпнӑ, анҫах ҫиййӗнҫех йӗкленсе кайалла кӑларса пӑрахнӑ. Ҫаккӑн хыҫҫӑн тин Пелт ҫав тери ҫипер шапасем ҫиме йурӑхсӑррине пӗлнӗ. Хурсемпе кӑвакалсем ӑна тахҫанах пӗлнӗ; вӗсем ҫав шапасене тӗсрен уйӑрнӑ. Акӑ ӗнтӗ епӗр ҫӗрӗ йапаласем хушшинҫе каллех ҫӗнӗ сых хатӗрӗсем (щиты): усал шӑрш, ҫиме йурами тутӑллӑ аш, тата ҫиме йурӑхсӑррине ҫийелтенех (тулашӗнҫенех) систерекен тӗссем куртӑмӑр. Сирӗнтен нумайӗшӗ кун ҫинҫен шухӑшламан та пулӗ. Анҫах тӗнҫе хӑй пултарнӑ аҫи-пӑҫишӗн пит тӑрӑшать. Вӑл вӗсене мӗн кирлине малтанах сиссе панӑ. Кӑна есӗр малта каланинҫен те куртӑр, анҫах малалла тата ытларах курӑр.

VIII.

## Ђӗрӗ ђунлӑ йапаласене хӳтӗлекен тӗссем.

Ҫӗр ҫинђе тата шывра пит нумай ђӗрӗ-ђун пурӑнат̆. Вӗсем миллионшарӑн шутланаҫҫӗ. Анђах ђӗрӗ-ђун ҫавтери нумай пулсан та, вӗсене пӗр-пӗринђен уйӑрма пулат̆. Уйӑрасса—кӗлеткисен форминђен, йе ҫийӗсенђи тумӗ тирӗсен тӗсӗсенђен уйӑрмалла.

Тинӗспе ҫырмасенђе пурӑнакансене ҫӗр ҫинђе, типӗ вырӑнта, пурӑнакансемпе танаштарса пӑхсан, каллех уйӑрма пулат̆. Кусен хӑйсен тӗс. Ђӗрӗ-ђунсем пӗр-пӗринђен тӗспе уйӑрӑласси—пуринђен ытла вӗсем хӑйсем пурӑнакан вырӑнтан килет.

Калани ђӑнах та пулат̆. Акӑ вӗсенђен пӗрисем—хӑйӑр, йе тӑм муклашкисемпе шурӑ ђул катӑкӗсем ҫеҫ пӗтӗм ҫӗре витнӗ пушӑ хирсенђе; тепӗрисем—кӑнтӑрлари, шӑрӑх вырӑнсенђи, ӗмӗр симӗс кашласа ларакан вӑрмансенђе пурӑнаҫҫӗ; виҫҫӗмӗшӗсем—пӗтӗм ӗмӗрӗсене ҫарансемпе куракла хирсенђе пурӑнса ирттереҫҫӗ, тата тӑваттӑмӗшӗсем—ӗмӗртенпех сивӗ, йурпа пӑртан ҫеҫ пуйан, ҫурҫӗр йенђи Пӑрлӑ тинӗс патнеллерех пурӑнаҫҫӗ. Пӑхӑрха ӗнтӗ ҫаккӑнта кӑтартнӑ ђӗрӗ ђунлӑ йапаласен тумтирӗсем ҫине! Мӗн тӗслӗ пулмалла пек туйӑнат̆ сирӗншӗн вӗсен тӗсӗсем?.

— Акӑ сирӗн умра вӗри шӑрӑхпа типсе ҫунса кайнӑ пушӑ хир. Унӑн тӑпри тӑмлӑ; тӑм ҫийӗнђе, вырӑнӑн, шутласа кӑларма ҫук тӗмескесемпе ђул катӑкӗсем сапаланнӑ: ним илемӗ те ҫук. Шутласан, кунта нийепле ђӗрӗ ђун та пулмалла мар пек, мӗншӗн тесен, ҭалккӗшпех ҫара вырӑн, пӑхсан та, унӑн вӗҫӗ-хӗри курӑнмаст̆. Анђах ҫав тери киресӗр, ђӗрӗ ђуна пурӑнма май ҫук вырӑнта та тӗрлӗрен калтасем, ҫӗленсем, вӗтӗ вӗҫен кайӑксем тата ытти ђӗрӗ ђунсем те пурӑнаҫҫӗ. Ҫитменнине тата вӗсем унта пайан-ӗнер анђах пыман, ӗмӗртенпе пурӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсен ҫийӗ-пуҫӗн тӗсӗ те ҫав вырӑнти йапаласем тӗслӗ пулса кайнӑ. Ҫӗленпе калта тирӗн хуппине ҫав хирти тӑм муклашкисемпе ђулсен тӗсӗнђен уйӑрас та ҫук. Вӗҫен кайӑксемпе ытти ђӗрӗ ђунлӑ йапаласене (млекопитающие) хӑйсем пурӑннӑ вырӑнти тӗс ҫапнӑ. Анђах вӗсем хӑйсем илемлӗ маршӑн пӗртте куђанмаҫҫӗ; шутласан, ытлашшипех кӑмӑллӑ, мӗншӗн тесен ҫав вырӑнти тӑпра тӗслӗ тӗс вӗсене нумай тӑшманӑн ҫивӗђ куҫӗсенђен хӑтарат̆.

Сăмахран тата Африккă пушă хирне илсе пăхăпăр. Кунта тĕнђе пушшех ђухăн. Темиçе çĕр çухрăм талккăшĕ хумлăн купаланнă хăйăр çех выртат, тата унта-кунта ђуллă сăртсем курăнкалаççĕ. Анђах çапла пулсан та, унта та пурăнакансем пур: авă, ђулсел ĕмĕлкинђе анттилопсем (хир



16-мĕш ўкерђĕк.—Анттилопсем

кађакисем) канса выртаççĕ; унгах, инçе те мар, вак ђулсем хушшинђе хир ђăххисем ђаваланса çимĕç шыраççĕ; çавăнтах тушканђђиксем (хир мулкађисем) сиккелесе çўреççĕ; тăрисем пĕр тĕмĕ çинђен тепĕр тĕмĕ çине пăртлатса куçаççĕ, тата кусенђен пуçне темĕн ђухлĕ калта, çĕлен шуса-ђупса çўрет. Шăлт тĕлĕнмелле! Çак асăннă ђĕрĕ ђунсен тирĕ тĕсĕсем пурин те, йури тунă пек, çавăнти тăпра тĕслĕ шупка сарă. Анђах кусем те хăйсен тĕсĕшĕн пĕртте пăшăрханмаççĕ,

мĕншĕн тесен вĕсен тĕсĕ, куçшăн илемсĕр пулсан та, кирлĕ вăхăтра ҫиперринҫен усăллăрах. Çири тĕс, хирте пурăнакан ҫĕрĕ ҫунсене, тăтăшах сăрт çинҫи ҫулсем, тата хăйăр хумĕсем хушшинҫе пурăнакан тăшмансенҫен хăтарать. Кунти пурăнăç



17-мĕш ӳкерҫĕк.—Пушă-хирти ҫăхăсем.

вĕсемшĕн, хăйсем тĕслĕ тăшмансем пулмасан, пит аван пулмалла, анҫах кунта тăшмансем те çав тĕслех. Акă сăмахран хир кушакĕ (рыç); тискер кайăксен патшине—арăслана илĕр. Вĕсем иккĕшĕ те каснă-лартнă çав вырăнти хăйăр тĕслĕ. Çав тĕс вĕсене тăтăшах пушă хирти ҫĕрĕ ҫунсен тӳлек пурăнăçне пăсма пулăшать. Вĕсем урăх тĕслĕ пулнă пулсан, пушă хирти

ђĕрĕ-ђун, вĕсене катаранах асăрхаса, вĕсенђен сыхланма тăрăшмалла; анђах рыçпа арăслан, хăйсемпе пĕр тĕслĕскерсем, пађ сисмен хушăра парне çине пăрахăнса ăна пĕтерсе хураççĕ.

Çитĕ. Хăйăрлă пушă хире хăварăпăр. Малалла кăнтăрла йенђи, вĕри шăрăх вырăнсенђи, вăрмансене куçăпăр. Кунта, ђакăр симĕс, çăра çулçăсем хушшинђе, ăраснах илемлĕ, капăр тĕклĕ кайăксем пурăнаççĕ. Вĕсем хушшинђе пађ симĕс тĕклисем те нумай. Акă тĕслĕхе: поппукай текен кайăка, кăвакарђăна тата ытгисене те илсе пăхар. Кунта вĕсем пур те симĕс тĕслĕ. Анђах çав симĕс тĕс, пушă хирти пекех, кунта та кайăксене тăшманран хăтăлма пулăшать (19-мĕш ўк.).



18-мĕш ўкерђĕк.—Тушканђђик—хир мулкађи.

Тата вăрманти курăк çине, унăн ăшне пăхăрха! Унта мĕн ђухлĕ калта, çĕлен, шапа тата ытти, вĕсене йевĕрлĕ, ђĕрĕ ђун йĕшĕлтетет; вĕсен тирĕсен тĕсĕ те çавăнти курăк тĕслĕ симĕс. Халĕ каллех куртăр: ђĕрĕ ђун мĕн тĕслĕ йапаласем хушшинђе пурăнать, çавсен тĕсне хăй çине илет. Ĕнтĕ иккĕлленмесĕр калама йурать: симĕс хупă (калтасен...), симĕс тĕк пĕр май симĕс йывăççем, йывăç тĕмисем, курăксем хушшинђе пурăнакансемшĕн пит усăллă,— тесе. Хăнăхман куç вĕсене, симĕсскерсене, кирек камăн пулсан та, симĕс çулçăсем хушшинђе тепĕр ђух асăрхаймасть те.

Пури-ха çак йĕрке (саккун) пирĕн хушăри вăрмансенђе?— Пур иккен. Пирĕн патри, çурçĕр йенеллерехри, вăрмансем ирхи çур тĕлĕнђе, хĕлле тата кĕркунне пит салхуллă тăраççĕ. Йывăççем çап çара; вĕсен тађка (хулăм) хуйăрĕсем çинђе шупка хăмăр тĕслĕ мăк, йе тимĕре çеç ўсет. Тата унта-кунта, йывăççем çинђе, шанса сарăхнă çулçăсем, çилпе ђĕтĕренĕ пек, вĕлкĕшеççĕ. Çĕр çинђе çапăпа, тутăх çапнă пек хăмăрланнă çулçă тĕмисем курăнкалаççĕ. Мĕн илемĕ пур ĕнтĕ пирĕн патри вăрмансен асăннă вăхăтсенђе?—Ђăнах та илемлĕ мар вĕсем. Анђах çав тери илемсĕр пулсан та, кунта та таврари

тĕнҫе тĕсĕ ҫапнă тĕрлĕрен кайăксем пурăнаҫҫĕ. Ĕмĕртенпе ҫавăнта пурăннăран, вĕсен ҫурăмĕсемпе айăккисем ҫинҫи тĕкĕсем каснă-лартнă таврара ӳсекен йывăҫ хуйăрĕсем тĕслĕ пулса тăнă. Ҫавăнтах—хăрăк турат тĕслисене, хăрса сарăхнă шулçă тĕслисене, йе тата, йывăҫсем ҫинҫе нумайранпа ӳснĕрен, тĕттĕмленнĕ мăк тĕслĕ пулнисене те курма йурăт. Ҫак тĕс, ытти вырăнти пекех, кунта та ҫĕрĕ ҫуна тăшманран хăтарăт.



19-мĕш ӳкерҫĕк.—Поротастиксем.

Вăрманта ҫех мар, шурти тылла-пуҫҫи ҫинҫе пурăнакан вĕҫен кайăксен тĕкĕ те тылла-пуҫҫи тĕслĕ пулнă. Тĕслĕх тылла-пуҫҫи ҫинҫе пурăнакан кайăка пеккаса илер. Унăн тĕкĕ те, тĕкĕ ҫийĕнҫи ӳкерҫĕкĕсем те хăй пурăнакан вырăнти ҫеҫкесем тĕслĕ (20-мĕш ӳкерҫĕк).

Малалла епĕр Пăрлă тинĕс хĕррине, йе унăн уттисене ҫитсе пăхăпăр. Анҫах епĕр унта; нихăҫан та ирĕлсе пĕтми йурпа пăр хушшинҫе, шатлама сивĕ 9—10 уйăх хушши тăнă вырăнта, шурă тĕсрен пуҫне урăх тĕс кураймăпăр. Кунта урăх тĕс, пулсан та, сайра анҫах пулма пултарĕ. Кунта авалтанпах (тĕпренпех) упа, мулкаҫă, хир ҫăххи, тăмана, креҫҫет тата урăхĕсем те пурăнаҫҫĕ, анҫах вĕсен тĕсĕсем пурин те

шурă. Шутласан, вĕсем урăх тĕслĕ пулмалла та мар, мĕншĕн тесен пĕр май йурпа пăр хушшинђе пурăнаççĕ.

Ытти вырăнти пекех шурă тĕс те çавăнта пурăнакан ђĕрĕ ђунсене нумай ĕç тума пулăшаť. Сăмахран: упанăн шурă çăмлă тирĕ, тата кређђетпа*) тăмананăн шурă тĕкĕсем вĕсене тĕлленĕ апат патне курађђен, систермесĕр пырса тытса илме пулăшаççĕ; мулкађăн шурă çăмлă тирĕ, хир ђăххипе потороšникĕн**) шурă тĕкĕсем вĕсене, тăтăшах, шурă йур тĕмескисемпе пăр катăкĕсем хушшинђе тăшманран тарса пытанма пулăшаççĕ.

Кунта çитеђђен епĕр çĕр çинђи тĕрлĕ вырăнсенђе пурăнакан ђĕрĕ ђунсен ăсне-хакне, çине-пуçне пахаларăмăр.



20-мĕш ўкерђĕк.—Пеккас—шурта пурăнакан кайăк.

Малалла тинĕсре пурăнакан ђĕрĕ ђунсем çине пăхар. Малта курнă пурăнăç вăрçийĕн йĕрки тинĕсре те пур-ши?—Пур иккен. Çавăнпа тирĕн тĕсĕ унта та нумай ђĕрĕ ђуна усă кўрет. Тепĕр пулă, йури сăрланă пек, каснă лартнă шыв, йе шывра ўсекен йапала тĕслĕ. Кам шыври çеçкесем (курăксем) хушшинђе пурăнаť, унăн тĕсĕ те çав хăй пурăнакан вырăнти, çеçкесем тĕслех; кам тинĕс тĕпĕнђи ђулсем хушшинђе, йе хăйăр ăшĕнђе пурăнаť, вăл—тинĕс тĕпĕ, йе унти ђулсемпе хăйăр тĕслĕ. Тата тинĕсри ђĕрĕ ђун тинĕс çине, çийеле тухмасăр пĕр май тарăн вырăнта пурăнаť пулсан, ăна шывра сасартăках асăрхаса илме те çук: вăл шалт тарăн вырăнти шыв тĕслĕ пулса кайнă; çийелте, шыв çинђе, пурăнаканĕсен тĕсĕ

*) Кречет—çурçĕр йенђе пурăнакан вăрăм сăмсаллă вĕçен кайăк.

**) Подорожник—хĕлле çул тăрăх вĕçекен кайăк.

пӑртак çутӑрах. Анҕах пуринҕен те тӗлӗнмеллерех акӑ мӗн: тинӗс шывӗ çийӗнҕе пурӑнакан (ишекен) ҕӗрӗ ҕунсен çурӑмӗ тӗксӗм кӑвак, хырӑмӗ çутӑ. Çак тӗс вӗсемшӗн пит аван: тӗксӗм кӑвак тӗс вӗсене тинӗс çинҕе, сывлӑшра, вӗçсе çӳрекен тӑшмансенҕен хӑтӑлма пулӑшат̆, çутӑ тӗс—айалти, тинӗсри, тӑшмансенҕен хӑтарат̆. Тӑшмантан хӑтӑлас ӗç акӑ йепле пулат̆: тинӗс çинҕе вӗçсе çӳресе пулӑпа тӑранса пурӑнакан тискер вӗçен кайӑксем çурӑмӗсем тӗксӗм кӑвак, шыв çийӗ тӗслӗ, пулӑсене шывран ҕас уйӑрса илеймеççӗ, айалтисем каллех çутӑ шурӑ хырӑмлӑ пулӑсене шыв кӑпӑкӗнҕен уйӑрай-масӑр тытаймаççӗ.

Акӑ тата есӗр пур те пӗлеттӗр: хӑш ҕӗрӗ ҕунсем—çара çерçи, çӗрлехи лӗпӗш, кайура тата урӑхӗсем те хӑйсен йӑвисенҕен кас пулнӑ ҕух, йе çӗрле çеç ӗçе тухаççӗ. Вӗсен пурин те тӗкӗ-çуçӗ тӗттӗм, вӗсене çӗрле, тепӗр ҕух, асӑрхама та çук. Шурӑ пулнӑ пулсан, вӗсем ҕасах тӑшмансен аллине лекмелле. Çавӑнпа тӗттӗм тӗс вӗсемшӗн пит усӑллӑ. Вӑл тӗс тӑшмансенҕен хӑтарнинҕен пуçне, тепӗр ҕух хӑйсене кирлӗ апата та сисеҕҕен тытса илме пулӑшат̆. Куртӑр-и ӗнтӗ, тум-тир тӗсӗ кунта та усӑ нумай кӳрет.

Шутласан—мӗн ҕухлӗ ҕӗрӗ ҕун çитӗнсе çитни, анҕах çитӗнекенни çамрӑкки пӗтет пурӑнӑç вӑрçинҕе?! Кайӑксем хушшинҕе тата мӗн ҕухлӗ çӑмарта пӗтет! Ҕӗрӗ ҕунлӑ йапа-ласем хушшинҕе кайӑксен çӑмартисене ӑстайӑн шыраса тупса вӗсемпе тӑранса пурӑнакансем те сахал мар. Анҕах çӑмарта-сене те: „на“, тесе параканӗсемех çук. Çавӑнпа кайӑксенҕен нумайӑшӗ çӑмартисене тӑшмансенҕен хӑтарас шутпа, йӑвисене пур йенҕен те хупӑ тума тӑрӑшаççӗ (çавӑраççӗ); тепӗрисем йывӑç хӑвӑлӗсенҕе, çыран хӗрринҕи çӗр шӑтӑкӗсене, йе паҕ никам та пымалла мар вӑрттӑн вырӑнсенҕе тӑваççӗ. Анҕах йӑвисене усӑ вырӑнсенҕе çавӑракансем те сахал мар; тата кайӑксенҕен хӑшӗ пӗри усӑ вырӑна çавӑрнӑ йӑвисене нимпе те хӳтӗлемеççӗ (картламаççӗ). Шутласан, кайранхисен çӑмар-тисем йӑвисене хӳтӗленисенҕен ытларах çухалмалла пек, анҕах каллех епӗр шутланӑ пек пулмаст̆: кун пеккисем йӑвисене урӑх майпа сыхлаççӗ.

Сирӗн хушӑра вӗçен кайӑк çӑмартисене алӑпа тытса, çавӑркаласа пӑхман çын çук та пулӗ. Асӑрхаман-и? Мӗн тӗслисем çук вӗсен хушшинҕе! Пӗрисем шурӑ, тепӗрисем кӑвакрах шурӑ, виççӗмӗшсем симӗсрех, тӑваттӑмӗшӗсем сарӑ,

йе тӗрлӗ; пур тӗсе каласа та пӗтерес ҫук. Кам тӑваӗ-ха ёнтӗ ҫав, тӗрлӗ тӗслӗ, ҫӑмартасене?—Акӑ кам. Асӑрханӑ тӑрӑх—шурӑ, йе тӗрлӗ мар ҫӑмартасене хупӑ йӑвасем ҫавӑракан кайӑксем тӑваҫҫӗ. Шултӑра тӗрлӗ, йе вӗтӗ тӗрлӗ ҫӑмартасене йӑвисене уҫӑ вырӑнта ҫавӑракан кайӑксем тӑваҫҫӗ. Мӗншӗн-ха капла ку?—Ӑна пӗлесшӗн пуҫа нумайах ҫӗмӗрме кирлӗ мар. Хупӑ, йе хӳтлӗхри йӑва уҫӑ вырӑнтинђен шанђӑклӑрах, ҫавӑнпа унти ҫӑмартасем шурӑ; уҫӑ вырӑнта тӑшман нумай, ҫавӑнпа унти ҫӑмартасем тӗрлӗ. Ку тӗс вӗсене тӑтӑшах тӑшманран хӑтараӗ, мӗншӗн тесен айӑкран уйӑрса илме йӑвӑр.



21-мӗш ӳкерђӗк.—Крађкӑ.

Акӑ, тӗслӗх, шыв ђӑххи майлӑ лысуххӑ йатлӑ кайӑка илӗпӗр. Вӑл йӑвине йури хӑмӑш хушшинђе, хӑмӑшӑн сарӑхса типнӗ, тата пӑнђӑн пӑнђӑн хура тутӑх ҫапнӑ ҫулҫисенђен ҫавӑраӗ. Лысуххӑн ҫӑмартисем те йӑви тӗслех. Вӗсене, тӗксӗм сарӑ тата хура тӗрлӗ хупӑлласкерсене, курса хӑнӑхман куҫ айакран мар, ҫывӑхран та хӑмӑш ҫулҫинђен уйӑраймасӗ.

Тата суйек*) йатлӑ, йӑвине шыв хӗрринђи хӑйӑр ҫине ҫавӑракан кайӑка илӗпӗр. Унӑн та ҫӑмартисем каснӑ-лартнӑ

*) Суйек—шыв хӗрринђе пурӑнакан кайӑк.

хăйăр тĕслĕ. Йулашкинђен шыв хĕрринђех пурăнакан крађ кă*) йатлă кайăка илĕпĕр. Вăл йавине тинĕс хĕрĕнђи вĕтĕ ђулсем хушшине çеç çавăрать. Çавăнпа унăн çăмартисем те çавăнти ђулсем тĕслех. Кунашкал тĕслĕх, шырасан, тата нумай тупма йурать, анђах епĕ: çитет пулĕ, тетĕп.

Çапла ĕнтĕ епĕр ытлашшипех тĕлĕнтерекен интересный) йапаласем çинђен пĕлтĕмĕр.

Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм каланинђен акă мĕн курăнать: *тĕнђе ђĕрĕ ђуна çех* мар, вĕсен çăмартисене те тĕрлĕ тĕс усăсăр паман; вĕсенђен нихăшĕ те—йепле май килнĕ, апла сăрлани çук. Пĕр сăмахпа каласан, тĕнђе пултарнă йапала пур те вырăнлă. Çăм, тĕк, хупă тата тир тĕсĕсем пуринђен ытла ђĕрĕ йапаласем хăйсем пурăнакан вырăн тĕсĕпе çураçуллă. Çав тĕссем, тăтăшах, вăйсăр тата хӳтлĕхсĕр ђĕрĕ ђуна тăшманран сыхлаççĕ, анђах тискер, йун тăкакан кайăксене те хăйсем тĕлленĕ парнисене сисеђђен вăрттăн пырса тытса илме май параççĕ.

Малта шутласа тухнă тĕссене вĕреннĕ çынсем ахаљ мар сыхлакан, хӳтĕлекен тĕссем тенĕ. Каланипе епĕр те çураçмасăр йулма пултараймастпăр.

---

IX.

## Татах ђĕрĕ ђунсене хӳтĕлекен (сыхлакан) тĕссем çинђен.

Африккăра, тата вырăнăн Аçире те нектаркккă йатлă пĕђĕк вĕçен кайăксем пурăнаççĕ. Кайăксен хушшинђе (патшалăхĕнђе) вĕсенђен ђиперри çукта-и, тен. Вĕсем калама та çук илемлĕ кĕлеткеллĕ; пуринђен ытла çийĕнђи тĕкĕсем пит капăр. Çав нектарккăсем ђеђексем çине пит тăтăш лараççĕ. Çавăнпа хăшĕ: вĕсем ђеђекĕн сĕткенĕпе тăранса пурăнаççĕ пулĕ, тесе шухăшланă. Анђах çапла шухăшлакансем йăнăшнă. Нектарккă ђеђек çине сĕткеншĕн лармасть мĕн, вăл ђеђекĕн ђашки ăшĕнђи хурт-кăпшанкăна пуçтарать, мĕншĕн тесен вĕсемпе тăранса пурăнать. Хăйсен йĕркипе ђеђексем те хурт-кăпшанкăна пуçтараççĕ, мĕншĕн тесен хурт-кăпшанкă ђеђексен сĕткенĕпе тăранса пурăнать.

*) Крађкă—тинĕс ђĕкеçĕ

Нектарккӑсем ним шухӑшсӑр, шикленмесӗр-тумасӑр капӑр-хитре ђеђексем хушшинђе пӑртлатса вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ. Анђах ђеђек ҫинђен хӑпӑнсанах, темӗнрен хӑранӑ пек васкаса, ухӑн сывлӑшри ҫивӗђӗшӗпе, вӗҫсе йывӑҫсен ђӑтлӑхне пытанаҫҫӗ. йе тата тепӗр ђеђек ҫине куҫаҫҫӗ. Мӗн хӑратма пултаратӑ-ха вӗсене? Мӗншӗн вӗсем ђеђек ҫинђен нумайлӑха



22-мӗш ӳкерђӗк —Нектарккӑ.

хӑпашшӑн (уйӑрӑласшӑн) мар?—Акӑ мӗншӗн. Нектарккӑ, хӑй те ђеђек пекскер, ђеђек ҫинђе ларнӑ ђух тӑшманӑн куҫӗшӗн питех палӑрмастӑ. Ҫавӑнпа вӑл ђеђек ҫинђе ытларах пурӑнма тӑрӑшатӑ.

Куртӑри ӗнтӗ?—Пӗр йышши ђӗрӗ ђуншӑн ђухӑн, тепӗриншӗн пуйан, капӑр тумтир усӑллӑ. Тепӗр тӗслӗ каласан: пӗри—ђухӑн, илемсӗр тумтирӗпе, тепӗри—(ҫиме йураман хурткӑпшанкӑ) ђипер, капӑр-пуйан тӗсӗпе тӑшман аллине лекесрен хӑтӑлатӑ. Тата виҫҫӗмӗшӗсем ђипер те, капӑр та, анђах ҫапах

хайсемпе тĕрлĕ ҫеҫексем хушшинҫех пурăнакан тăшмансенĕн куҫĕсемшĕн пит асăрхамаллах мар.

Акă тата сирĕнтен кам та пулин ленивтсă йатлă упăтене курнă та пулĕ: ăна ҫийĕнҫи ҫăмăнҫен паллама пит аван. Тата вĕсенҫен нумайĕшĕн ҫурăм ҫинҫе хĕрлĕ тăм тĕслĕ кăстăрмаҫ пек ҫаврашка (ункă) пур; ункă хĕррипе хура кайма ҫавăрăннă. Ҫав каймаллă ункă упăтене пушшех палăртат. Кăтартнă паллăран шутласан, ленивтсăна шултăрарах тискер кайăксенҫен нихăҫĕ те асăрхамасăр иртес ҫук пек туйăнат, мĕншĕн тесен ҫурăмĕ ҫинҫи ункă: на, тыт, тесех кăтартса парат. Тата ленивтсă хăйне хăй ни хўтĕлеме, ни пытарма пултараймаст, ҫитменнине пит лўппер. Анҫах ҫăнах та апла-и-ха упăте тăшманран хўтĕленес ĕҫ?—Ҫук, ĕҫре урăхларах курăнат. Упăтенĕн ҫурăмĕ ҫинҫи палли вăл ҫĕр ҫине ансан ҫех аван палăрат, йываҫ ҫинҫе ҫух питех те палăрмаст. Хăй вăл пурăнасса — йываҫ ҫинҫе ытларах пурăнат, ҫĕр ҫине сайра хутра анҫах анкалат. Ун ҫинҫен пĕр авалхи поет ҫапла калат:



23-мĕш ўкер.—Ленивтсă (упăте).

ленивтсăна шаннă мăк тĕслĕ тĕкĕ-ҫўҫĕ йываҫсем хушшинҫе пытанма пулăшат; ҫитменнине икĕ хулпуҫҫи хушшинҫе хĕрлĕрех тăм тĕслĕ лаптăк та (пятно) пулсан, тата вăл хăй йываҫ ҫумне ҫыпăҫсах ларнă пулсан, ăна хуҫăлса ўкнĕ турат кутĕнҫен уйăрса та илме ҫук. Вăл тĕлĕшрен тепĕр ҫух ăста кайăкҫăсем те йăнăшаҫҫĕ (улталанаҫҫĕ), тет.

Акă тата сирĕнтен кам илтмен: хăш ҫĕрĕ ҫун хĕлле пĕр тĕслĕ, ҫулла тепĕр тĕслĕ тумтирпе ҫўрет, тенине. Тĕслĕх малтан хамăр хушăри мулкаҫăнах илĕпĕр. Вăл ҫулла хурарах хăмăр, хĕлле шурă. Мĕн тума кирлĕ-ха ĕнтĕ ăна ку икĕ тĕс?—Каллех тăшманран хăтăлмах кирлĕ. Хĕлле, ҫĕр ҫийĕ шурă ҫух, мулкаҫшăн йур тĕслĕ пулни усăллă, мĕншĕн тесен шурă йур ҫинҫе шурă тĕс палăрмаст. Ҫавăнпа мулкаҫ кашни хĕл пуҫламăшĕнҫе ҫийĕнҫи тумтирĕн тĕсне улăштарат. Анҫах тĕс улăштаракан ҫĕрĕ ҫун мулкаҫ ҫех мар, урăхĕсем те пур. Вĕсем: йус, ҫурҫĕр йенҫи тилĕ; вĕҫен кайăксенҫен—ҫурҫĕр йенҫе пурăнакан пăҫăр (куроппаткă).

Ӑшӑ ђух, пӑђӑр хӑй пурӑнакан вырӑнти мӑкпа витӗннӗ ђулсем тӗслӗ; хӗлле ҫӗр-шыв йурпа витӗнсен, ку тӗс уна тӑшманран хӑтараймаст̆, ҫавӑнпа унӑн хӗле кӗнӗ ҫӗре ҫуллахи тӗкӗ тӑкӑнат̆ те, вырӑнне шурӑ тӗк ӳсет.

Малалла ҫурҫӗрте пурӑнакан тилӗне илсе пӑхар. Унӑн ҫӑмӗ хӗлле шурӑ-кӑвак, тађах пӑрланнӑ йур кӗрђӗ (глыбы) тӗслӗ. Акӑ, ҫу ҫывхарса килет. Йур ирӗлсе хуралат̆. Пӑр кӗрђӗсем ҫийелтен пылђӑкпа витӗнеҫҫӗ; тӑмлӑ ҫӗр йуртан уҫӑлат̆. Малалла ӗнтӗ шурӑ тӗслӗ тумтир те усӑсӑр пуласси палӑрат̆. Тилӗ те ҫывӑрмаст̆: вӑл тумтирне улӑштарма вӑхӑтра



24-мӗш ӳкерђӗк.—Ҫурҫӗр йенђи тилӗ.

ӗлкӗрнӗ. Ҫур ҫывхарса пынӑ ҫеммӗн тиллӗн тирӗ те хуралнӑ. Вӑл шурӑран хӗрлӗрех пылђӑк тӗслӗ пулса тӑнӑ. Шутласан ун ҫийӗнђе каллех хӑйне таврари йапаласен тӗсӗ. Хӗл ҫывхарнӑ вӑхӑта ку тӗслӗ ҫӑм каллех тӑкӑнат̆ те, вырӑнне шурӑ шӑтат̆. Ҫапла ҫурҫӗр йенђи тилӗ ҫулталӑкра икӗ хут ҫӑмне тӑкат̆. Йус та ку тӗлӗшрен тилӗ майлах: ҫӑмне ҫулталӑкра иккӗ тӑкат̆. Вӑл та хӗлле шурӑ, ҫулла хӗрлӗрех хӑмӑр тӗслӗ пулат̆.

Телейлӗ—тӗнђенӗн тӗлӗнмелле ирӗкӗпе ҫулталӑкра икӗ хут тумтирӗсен тӗсне улӑштарма пултаракан ђӗрӗ ђунсем. Анђах хӑйӗн ҫийӗнђи тумтирӗн тӗсне кашни кирлӗ минуттӑрах улӑштарма пултарат̆ тата телейлӗ. Тӗнђере йулашки пеккисем те пур. Акӑ сӑмахран, ытлашши пысӑк та мар „хамелеон“ йатлӑ калтана илер. Ку пит тӗлӗнмелле йапала! Унӑн тирӗ пӗр минуттӑ хушшинђе шурӑран сарӑ, сарӑран симӗс, йе хӑмӑр, йе тата урӑх тӗслӗ пулма пултарат̆. Кӗскереххӗн каласан: мӗн йапала ҫийӗнђе, йе хушшинђе пурӑнма тытӑнат̆,

унӑн тирӗ тӗсӗ те ҫав йапала тӗслӗ пулат̆. Акӑ ӗнтӗ, пырса калаҫ унпа! Кам: усӑсӑр, йе йурӑхсӑр, теме пултарӗ вӑл ӗҫе!



25-мӗш ӳкерт̧ӗк.—Вӑрмаҥ пӑт̧ӑрӗ ҫуллахи тӗкӗпе.



26-мӗш ӳкерт̧ӗк.—Пӑт̧ӑр хӗллехи тумтирӗпе.

Анђах—хура, унтах—сарӑ. Хӑш тӗс уншӑн усӑллӑрах, вӑл унӑн ҫийӗнђе! Ӑҫтан ӗнтӗ ӑсӑрхаса илтӗр уна тӑшман, вӑл симӗс курӑк ҫинђе ларнӑ ђух! Курӑк симӗс, вӑл та симӗс. Вӑл хӑмӑр, йе сарӑрах ђул ҫине куҫнӑ, унӑн ҫийӗнђе те ҫав тӗслӗ пулма ӗлкӗрнӗ. Акӑ тата, вӑл хӑй те кӗтмен хушӑра шупка хӑмӑр хуйӑрлӑ йывӑҫ ҫине лекнӗ. Мӗн шутлаттӑр есӗр?

— Вӑл унта та ҫав йывӑҫ тӗслӗ пулса тӑрса тӑшман асӑрхайми пулнӑ.



27-мӗш ӳкерђӗк.—Хамелеон.

Хамелеона йевӗрлӗ ђӗрӗ ђунсем тата шывра пур. Вӗсенђен пӗри — кампала йатлӑ пулӑ, тепӗри — спрут йатлӑ рак хуранӗ ӑшӗнђе пурӑнакан ђӗрӗ йапала (слизняк). Вӗсен хушшинђе уйрӑмӗ те нумай мар. Хамелеон хӑйӗн тӗсне тӑшманран хӑтӑласшӑн улӑштарать, кампалапа спрут хӑйсен парнисем (ҫимелле йапаласем) вӗсем пынине ан систӗр тесе улӑштараҫҫӗ. Кампала ҫимелли йапалана хӑваласа тытма йуратмасть. Вӑл ӑна хӑйӑр ҫинђе кӗтсе выртса сыхласа илет. Ҫавӑн ђух унӑн тӗсӗ тинӗс тӗпӗнђи хӑйӑр тӗслӗ пулать. Спрут та ҫимӗҫе кампала пекех тытса илет. Вӑл тинӗс тӗпӗнђи ђулсем хушшине кӗрсе выртать те, ҫимӗҫ ҫывӑха пырасса ђӑтӑмлӑн кӗтет. Ҫывхарсанах, уткӑнса йарса илет.

---

X

## Ирӗксӗр улталакансемпе ђӗрӗ тапӑсем.

Ҫут ҫанталӑкра ытлашши пысӑкках та мар похађи йатлӑ нӑрӑ пур. Кайӑксенђен нумайӗшӗ ҫав нӑрӑсене ҫиме пит йуратаҫҫӗ, анђах вӗсене асӑрхаса илме йӑвӑр, мӗншӗн тесен, вӗсем, йапаласем ҫинђе ларнӑ ђух, тӗрлӗ тӗслӗ пулаҫҫӗ. Акӑ вӗсенђен пӗри ҫулҫӑ ҫине ларнӑ та, каснӑ-лартнӑ ҫулҫӑ ҫине ӳкнӗ кайӑк пӑхӗ тӗслӗ пулнӑ. Тепӗрине нийепле те петрушкӑ, йе паҫтернак (карта ҫимӗҫӗсем) вӑррисенђен уйӑрса илес ҫук, виҫҫӗмӗшӗ шӑлтах курӑк ҫинђи кӗмӗл тӗслӗ сывлӑм тумламӗ пек. Ҫаккӑн хыҫҫӑн кам тӗкӗнтӗр ӗнтӗ

вĕсене! Кайăк пăхĕ тĕ, петрушкă вăрри те, тата çывлăм тумламĕ те кайăксене паҙах кирлĕ мар. Çапла—кайăксем çав нăрăсене çимелле мар йапаласем вырăнне хунипе пит йăнăшаççĕ. Анҙах кайăксем улталанни нăрăсемшĕн аван: вĕсем йăнăшнипе нăрăсене тĕкĕнмесĕр иртсе кайаççĕ, нăрăсем тĕрĕс тĕкел йулаççĕ. Куртăри ĕнтĕ? Шăлт тĕлĕнмелле ку ĕçрен! Ҙĕрĕ йапаласем ҙĕрĕ мар йапаланăн курăнма пултараççĕ. Кун çинҙен тĕплĕрех каланине епĕр малалла тата курăпăр, халĕ пире тăшмана улталама кăтартнă пек май пуррине пĕлнипе те çитĕ.

Шутласан, ҙăнах та урăхлă пулма та кирлĕ мар. Ҙĕрĕ ҙунлă йапаласен—çăмĕн, тĕкĕсен, хупписен, тата тирĕсен тĕсĕсем усăсăр мар пулсан, йапаланăн формипе сăнсăпаҙĕ те пурăнăçра усăсăр пулмалла мар. Калани тĕрĕссине кăтартма çак тĕслĕхсене илĕпĕр. Акă вĕсенҙен пĕри: пĕрре, пĕр Уйер йатлă вĕреннĕ çын аллине çĕçĕ илнĕ те, йывăç пахҙине йывăçсем çинҙи хăрăк туратсене тасатма кĕнĕ. Пĕр çливă йывăççи кутне пырса тăрсан, вăл ун çинҙе хăрăк турат пуррине асăрханă. Анҙах çав турат, çĕçĕпе тĕкĕнсенех, йăшăлтатма тапратнă та, çĕре ӳкнĕ; унтан вăраххăн шума тытăннă Çакна курсан, Уйер шăлт тĕлĕнсе хытнă. Ҙăнах такам та тĕлĕнмелле. Çĕçĕпе касас тесе тĕкĕннĕ йапала турат пулман, икĕ ӳуйм тăршшĕ хурт пулнă. Çав хурт хăйĕн тирĕн тĕсĕпе, тата шăмми-шаккипе, икĕ тумлам шыв пек, каснă-лартнă хăрăк турат пулнă. Тата унăн пуçĕ те турат çинҙи çурăлман кăҙкă пек пулнă. Асăрхăр-ха ĕнтĕ! Уйер вăтăр çул хушши тĕрлĕрен хурт-кăпшанкăсемпе аппаланнă; çав хушăра тем тĕслĕ хурт-кăпшанкă та курнă; вĕсен пурăнăçне урлă та, пирлĕ те (тĕпĕ-йĕрĕпе) сăнаса вĕреннĕ, анҙах çапах та йăнăшнă. Çаккăн хыççăн кайăксем йăнăшнинҙен мĕн тĕлĕнмелли пур ĕнтĕ! Халĕ иккĕленмесĕр, йăнăшмасăр: çав хурт, ыттисем 1000-шерĕн пĕтнĕ хушăра, сайра-хугра çеç кайăксен ирхи апаҙĕ пулма пултарат̆, тесе калама йурат̆.

Малта кăтартнă майпах тăшмансенҙен тата тепĕр хурт хăтăлат̆. Вăл хурт ансăр çулçăллă, тата кăвак ҙеҙеклĕ çеçкесемпе (курăксемпе) тăранса пурăнат̆. Шăлтах тĕлĕнмелле: çав хуртăн кĕлетки тĕсĕ çулçă пек çимĕс; пуçĕ-тĕсĕпе те, формипе те каснă-лартнă кăвак ҙеҙек. Çавăнпа ăна, хăй йуратнă çеçке çинҙе, симĕс çулçăсемпе кăвак ҙеҙексем хушшинҙе, ларнă ҙух, асăрхаса илме пит хĕн.

Тата кунтан та йăвăртарах тепĕр шăрђăка асăрхаса илме, мĕншĕн тесен вăл йывăç çинђен ўкнĕ пĕђĕкрех çулçăпа шăпах пĕр тĕслĕ. Ăна пĕрре çех мар кăткă тĕми çумĕнђе, кайла-майла пĕр май йăшăлтатакан кăткăсем хушшинђе,



28-мĕш ўкерђĕк.—Турат майлă хурт.

тĕл пулма пулать. Вăл урисене хырăмĕ айне пуçтарать те, ним тапранмасăр, кисренмесĕр кăткăсем хушшинђе выртать. Темĕн ђул кăткă ун урлă каçса çўрет. анђах вăл шăрђăкне пĕлмест. Çав тĕрлĕ ултавлă сăн-сăпат пулмасан, вăл шăрђăка кăткăсем тахçанах пайăн салатса хăйсен йăвине илсе кĕмелле.

Анђах асăннă шăрђăк йевĕрлĕ телейлĕ ђĕрĕ йапаласене лĕпĕсем хушшинђе те тĕл пулма йурать. Кам пĕлмест сирĕн-

тен—кайăксем, тата урăх ђĕрĕ ђунсем те лĕпĕсемпе тăранса пурăннине? Акă сирĕн умра каллимă йатлă лĕпĕ турат çинђе ларат̆. Ăна малтанах есĕр турат çинђи çулçăран нийепле те уйăрса илейес çук.. Тишкеререх пăхсассăн тин унăн урисене, хырăмне, тата саланса пуçтарăнма пултаракан тавăрăнђăк сăмсаллă пуçне курма пултаратăр. Есĕр сарăхнă çулçă




29-мĕш ӳкерђĕк.—Каллимă лĕпĕ çулçăллă турат çинђе.

вырăнне хунă йапала, кĕтмен вăхăтра, лĕппĕн пуçтарнă çунађĕсем пулса тăраççĕ. Çапла каллимă лĕпĕ хăйĕн çунађĕсене пуçтарса турат çинђе ларнă ђух, çитменнине туратăн çулçисем те типсе сарăхнă пулсан, ăна кайăк мар, етем те çулçăран аран уйăрса илме пултарат̆. Каллимă хăй пит ђипер лĕпĕ: çунађĕсен пит йенĕ çутă, тӳнтер йенĕ типсе хăрнă çулçă тĕслĕ, тата çунађĕн шăнăрĕсем те çулçă шăнăрĕсем пекех. Каллимă вĕçме пит йуратмаст̆, тата симĕс çулçăллă

йывă̌ç-курăк çине те сайра ларат̆. Пуринђен ытла вăл шанса шурăхнă çулçăллă йывăçсемпе çапă куписем çинђе пурăнат̆. Уншăн унтан ырă вырăн çук та. Унта ăна никам та ђăрмантармаст̆; симĕс йывăç-курăк хушшинђе, тата сывлăшра (вĕçнĕ ђух) вăл тащман аллине ђас лекме пултарат̆.

Каллимă çинђен калани камшăн тĕлĕнмелле мар ĕнтĕ! Çитменнине ăна никам та: „ђăн мар,“ тесе калама пултараймаст̆. Çапла, тĕнђере ђĕрĕ йапалана та пурăнма питех çăмăл мар иккен. Пурăнас ĕмĕтпе тăшманран хăтăласшăн, нумай ђĕрĕ йапаланăн йаланхи тĕсне улăштарса йе турат пек, йе çулçă пек, йе тата кайăкăн пăхĕ йеверлĕ пулас пулат̆.

Йепле пурăнаççĕ-ха тата хурт-кăпшанкăсемпе тăранса пурăнакан тискер лĕпĕшсем?—Кусемшĕн пытанса ларса апата (çимĕçе) тытса илесси пушшех кирлĕ йапала. Çавăнпа вĕсем те ку тĕлĕщрен малта асăннă ђĕрĕ ђунсенђен кайах йулмаççĕ.



30-мĕш ӳкерђĕк —Похомол—ђĕрĕ турат.

Пĕрре, пĕр Форпус йатлă вĕреннĕ çын, çеткăпа лĕпĕсене тытса çӳренĕ ђух, пит ђипер, кăвак лĕпĕ кайăк пăхĕ çинђе ларнине курнă. Лĕпĕ çав тери аван мар вырăнта ларни ăна пит тĕлĕнтернĕ. Вара Форпус, лĕпĕ мĕн тунине пĕлесшĕн, алла çеткă илнĕ те, вăл ларнă вырăна йăпшăнса пынă. Лĕпĕ, хăраса тарас вырăнне, хăйне алăпа тытса илмех панă. Анђах алăпа сĕртĕнсенех, унăн ӳђĕн пайĕ кайăк пăхĕ çумне, çыпăçнă пек, татăлса йулнă. Кун хыççăн вăл, кайăк пăхĕ çилĕмлине пĕлесшĕн, тишкеререх пăхса, ăна пӳрнипе сĕртĕннĕ. Мĕн шутлаттăр есĕр?—Форпусăн куçĕсем йăнăшнă: кайăк пăхĕ вырăнђе урисене хуçса çурăмĕ çинђе ерещмен выртнă. Кам ан тĕлĕнтĕр ĕнтĕ çакăнтан! Ерещмен каснă лартнă кайăк пăхĕ пек! Шăлт кулăшла йапала! Анђах, ку йапала çав

ултавлă ерешмен аллине ним шухăшсăр вĕççе пырса лекекен лĕпĕшĕн кулăшла мар.

Тепĕр ерешмен хăйĕн парнине (апатне) тата ђейерех ултаҫат. Вăл каснă-лартнă апата сыхласа тытма хăй ларнă йывăç-курăк çинђи ђеђекĕн кăђки пек. Вăл йалан—йывăç, йе курăк турађĕ çине ларат те, хăйĕн парни килессе тăппăн пĕр тапранмасăр кĕтет. Çав хушăра вара—ун çине, ђеђек кăђаки çине ларатăп, тесе ларнă çăмăл ăслă пуçлă щăна кĕтмен хущăра унăн парни пулса тăраҫ. Йун йуратакан ерещмен ăна йăпăр-йапăр çулса илет те, пĕтерсе те хураҫ.

Малта асăннă хурт-кăпшанкăна ăста тытакан похомол йатлă щăрђăка есĕр манман та пулĕ-ха. Вĕсен хушшинђə



31-мĕш ўкерђĕк.—Похомол—çўрекен çулçă.

тата пит паллă йăх пур. Çав йăхран тухнă щăрђăкăн тăршшĕ пĕр фута çитет, тађкăшĕ пўрне пек. Куракан малтанах ăна: ђĕрĕ йапала, тесе калас та çук. Çав ниме киресĕр тĕслĕ йапала (пугало), ăçта та пулсан тĕмĕшне, пытанса лараҫ те, айван хурт-кăпшанкăсене нумайђђен ђăтăмлăн кĕтет. Лешсем ăна тăшман тесе щутлама та пĕлмеççĕ, мĕншĕн тесен вăл ђĕрĕ йапала пек мар. Унăн кĕлетки каснă - лартнă ўсекен йывăç турађĕ пек. Тирĕ шатрашка, типĕ мăк тĕслĕ, кĕсен-çăпан йевĕрлĕ йапалапа витĕннĕ; урисем турат çинђи пĕр çулхи хулăсем пек Йепле йăнăщас мар ĕнтĕ унта! Ђăнах та, вак-тĕвек хурт-кăпшанкăран хăшĕ-пĕри йăнăшса унăн тути айнех пырса кĕрекенĕ те нумай. Çавăн пек ђух щăрђăк çывăрмаҫ: пў

çитмелле пулсанах, кăпшанкăна урисемпе йарса илет те, çăварне пĕрсе ђикет.

Асăннă йышши шăрђăк йевĕрлĕ, ђĕрĕ турат пек, йапаласем пуринђен ытла кăнтăрла йенђи шăрăх çĕрсенђе тĕл пулкаласçĕ. Анђах çавăнтах тата урăх ăрэтă шăрђăксем пур. Вĕсене ылтарлă: „çӳрен çулçăсем (ходячие листы)" теççĕ. Çав шăрђăксене: „çӳрекен çулçăсем" теме ђăнах та май пулнă. Вĕсен çунађĕсем пысăк. Кашни çунађĕ симĕс, йе çурмалла сарăхнă çулçă йевĕрлĕ. Çунађĕсен шăнăрĕсем те йывăç çулçи шăнăрĕсем пекех. Мăнтăр, шампа хырăмĕ пађах курăнмасть, мĕншĕн тесен ăна çунађĕсем хупласа пытараççĕ; малти урисен шултăра çулçă (çумĕнђе) кутĕнђе ӳсекен кĕçĕн çулçă пек. Кĕскенĕн каласан, тĕнђе çав шăрђăка—йурийех ытти хурт-кăпшанкăна улталанма çавăн пек пултарнă, теме те йурать. Хурт-кăпщанкă ђăнах та, ăна çулçă вырăнне хурса, тăтăш унăн апађĕ пулать.

Çапла: аван „ђĕрĕ турат," тенĕ шăрђăк; унран кайа мар „çӳрекен çулçă" тенĕ шăрђăк та. Анђах вĕсем иккĕшĕ те виççĕмĕш йышши похомола çитеймеççĕ. Виççĕмĕшĕ—хăйĕн формипе те, тĕсĕпе те хăй пурăнакан вăрманти пĕр ђаплă çеçкенĕн ђакăр хĕрлĕ ђеђекĕ йевĕрлĕ. Акă ĕнтĕ пирĕн умра каллех хурт-кăпшанкăн ђĕрĕ таппи. Тĕрлĕрен лĕпĕ, тата хурт-кăпшанкăран урăхĕсем те, çав ђакăр хĕрлĕ тĕслĕ похомола курсанах, ун çине сĕткен нумай илес ĕмĕтпе лараççĕ. Ђăнах та, иртсе пыракантан никам та лармасăр ђăтайас çук. Асăрхăр-ха: ака сирĕн умра куракксем хушшинђи пит ђипер, ђакăр хĕрлĕ ђеђек. Ăçтан иртсе кайтăр хурт-кăпшанкă ун çине лармасăр! Хурт-кăпшанкă мар, етем те тытса пăхмасăр ђăтас çук, мĕншĕн тесен илĕртӳ пит хăватлă. Çавăнпа айван лĕпĕш, йе ытти хурт-кăпшанкă ăна курсанах, ун çине ларать те, сăмсине (тутине) ђăсса сĕткен илме шутлать. Анђах ăна, кĕтмен хушăран, вăйлă урасем ним хĕрхенмесĕр сасартăк йарса илеççĕ те, тăшманăн тути патне илсе пыраççĕ... Ђеђек—тапă хăйне мĕн кирлине турĕ. Вăл тутă, лĕпĕш пĕтни уншăн нимĕн те мар. Шутласан, урăхла пулмалла та мар: похомол, апат шыранă ђух, хăйне тĕнђе панă хатĕрсене анђах ĕçе кӳртет.

Кам тĕлĕнмĕ?—Ђăнах такам та тĕлĕнмелле—тĕрлĕ ђĕрĕ йапаласен хӳтлĕхпе апат шырамалли хатĕрĕсем çинђен тĕплĕрех шутласан.

Кам илтмен сирĕнтен: сурăх тирне тăхăннă кашкăр çинђен йуптарса каланă йумаха? Тĕрĕссипе каласан ун пек кашкăрсем çук. Анђах çаккăнта, малта шутласа тухнă тĕрлĕ тискер ђĕрĕ ђунсем, мĕнрен сурăх тирне тăхăннă кашкăрсем мар? Çипуçĕнђен, тата тулашĕнђен пăхсан, вĕсем никама та усал тăвас çук пек, анђах пырса лек-ха вĕсен аллине!



32-мĕш. Пулă—тинĕс лаши

Ађа ђух пире тăтăшах куç пăвакан калпах çинђен каласа йуптарађђĕç. Ђăннипе каласан, ун пек калпака никам та курман, мĕншĕн тесен—вăл пулман. Анђах хурт-кăпшанкăсемшĕн мĕншĕн курăнми калпак мар—кайăк пăхĕ тĕслĕ ерешмен, сывлăм тумламĕ тĕслĕ нăрă, тата урăхĕсем те? Çитĕ... Мĕне кирлĕ пирĕншĕн йумахри хăватсем?! Ђăн хăват хамăра çавăрса тăракан тĕнђере темĕн ђухлĕ! Тĕнђене йуратăр, ăна сăнаса вĕренĕр, вара сирĕншĕн йумахри пек хăватсем кулăшлăн анђах курăнĕç.

---

XI.

## Йут тумтир тăхăнакансем.

Ђĕрĕ ђунлă йапаласем хушшинђе йут тумтир тăхăннисем пур. Кам ĕнентĕр ĕнтĕ кăна!?—Ђăн, ђĕрĕ ђунлă йапаласем етем пек çветкă пулмаççĕ, анђах тепĕр ђух вĕсен те ирĕксĕрех йут тумтире çийе хумалла пулать. Çакна вĕсем кўштесе, кулă вăйăшăн тумаççĕ, пурăнăçра килекен тĕрлĕ инкек-синкек тутарать. Етем йут тумтире мыскара тунă вăхăт иртсенех хывать; ђĕрĕ ђунлă йапаласем хушшинђе ку ĕç апла мар: камăн йут тумтирпе çўреме шăпа тухнă, вал çав

тумтирпех çуралса вилет; хăйĕн çийĕнђи тумтире, çĕр çинђе пурăннă ђух, пăрахас тесен те, пăрахаймасть.

Пĕр шăна пур. Вăл пирĕн патри шăнасенђен шултăрарах, тата унăн кăмăлĕ те ăраснах урăх. Пуринђен ытла вăл пыл хурђĕсене сийен кӳрет, вĕсемшĕн унтан усал тăшман çук та пулĕ. Çăмарта тума вăхăт çитсессĕн, çавă шăна вĕллене кĕрет те, йăвари карас куçĕсен ăшне çăмартисене хурса тухать. Вара çав шăна хунă çăмартасенђен пулнă хуртсем вĕллери пĕтĕм пыл хурђĕсен шур хуртне çисе йараççĕ. Есĕр калăр: апла пулсан, вĕллери пыл тăвакан хуртсемпе алăкри хуралçă хуртсем мĕне кура ăна хăйсен ђи усал тăшманне, вĕллене кĕртеççĕ, тейĕр. Анђах кунта пыл хӳрђĕсене айăплама май çук, мĕншĕн тесен çав шăна шăлтах пыл хурђĕ тĕслĕ. Вĕсем ăна, хăйсен йулташĕсенђен уйăрса илеймесĕр, ирĕккĕн кĕртсе йараççĕ.



33-мĕш ӳкер.—Сăпса майлă пăрă.

Вĕллене кĕнĕ шăна, пыл хурђĕсен хушшинђе хăйĕн ĕçне тунипе, вĕсен йĕркеллĕ пурăнăçне çĕмĕрет. Çавна майлă йапалах тата ерешмен пур: вăл кăткăсен йăвисене çĕмĕрет. Кунăн сăнсăпађĕ, тата пысăккăшĕ те каснă - лартнă кăткăн пек. Ăна кăткăран нийепле те уйăрма çук. Кăткăсен йăвине лексен, ерешмен кунĕпе вĕсем мĕн пурне - çукне тустарать. Пăхсан, хăй ĕçленĕ пек çӳрет, анђах ĕçлемест. Пăртак майлă вăхăт тупăнсанах, çамрăк кăткăсене пăвать, йе çăмартисене çиме тăрăшать. Çав ерешмен кăткă тĕслĕ пулмасан, кăткăсем ăна хăйсен йăвинђе минуттă та пурăнма парас çук: çуркаласа тăкмалла, анђах вĕсене те тăшман хăйсем йеверли

пĕтерет. Куртăри ĕнтĕ, йут тумтир тăшманшăн йепле усăллă! Тĕнђе—вăрçă хатĕрĕ, йе хӳтлĕх паман ђĕрĕ ђуншăн хӳтĕлекен тĕспе йевĕр те темрен паха.

Епĕр пĕлетпĕр: кайăксенђен нумайĕшĕ сăпсасемпе пыл хурђĕсене сăннисенђен хăранипе тивмеççĕ. Тĕнђере тата сăпса йевĕрлĕ нăрăсем пур. Вĕсенђен хăшне-пĕрне сăпсапа йунашар хурсан, уйăрас та çук. Вĕсен сăнни мĕнĕ çук, анђах вĕсене хăйсем сăпсапа пыл хурђĕ йевĕрлĕ пулни тăшманран аван хăтарать. Вĕçен кайăк вĕсене сăнăллă сăпса вырăнне хурать те, тĕкĕнмест. Нăрăсемшĕн ку каллех пит аван.

Малалла тата йут тумтирлĕ лĕпĕсене пăхăпăр. Пĕр лĕпĕ пур. Вăл хăйĕн формипе, тĕсĕпе тата пысăккăшĕпе те сăпса



34-мĕш ӳкерђĕк.—Сăпса йевĕрлĕ лĕпĕ.

пек. Палламан çын ăна: ку лĕпĕ мар, сăпса, темелле. Çакă лĕпĕшĕн сăпса тĕсĕ каллех пит усăллă. Лĕпĕсене ним хĕрхенмесĕр пĕтерекен кайăксем вĕсене сăпса вырăнне хураççĕ те, тĕкĕнмеççĕ, мĕншĕн тесен никамăн та хăйне сăхтарас килмест.

Çапла—тăшмана сирмелли йапала пит нумай. Тытса çийес текенĕсем те сăнăран çех мар, тата ытти хӳтлĕхсенђен те хăраççĕ. Сăмахран каллех малта асăннă усал шăршăна илĕпĕр. Кама хăтармасть тытса çийес йапаларан кĕрекен усал шăршă, йе усал, çиме йурăхсăр ашĕ. Кун пек тĕслĕхсене епĕр малта та нумай курнăђђĕ, анђах татах тепĕр тĕслĕх илсе пăхăпăр; ку тĕслĕх пире тата çĕнĕ йапала çинђен ăнлантарĕ.

Кăнтăрлари Америкри шăрăх вырăнсенђе ђакăр тĕслĕ илемлĕ лĕпĕсем пит нумай пурăнаççĕ. Вĕсен хушшинђе пуринђен те ытларах ђапли геликконитă йатлă. Геликконитăсен тĕсĕ ула; хăйсем ытла вĕтĕ мар; сывлăшра йăвăррăн тата вăрахăн çеç вĕçеççĕ. Вĕсене палласси те пуринђен ытла

вӗҫнинђен паллама ҫӑмӑл. Ђӑн, вӗсен васкаса вӗҫме те кирлех мар, мӗншӗн тесен кайӑксенђен сайра кам вӗсене хӑвалаӑ; тата хӑваласан та, палламанни анђах хӑвалама пултараӑ. Ҫав лӗпӗсен ашӗ пађ ҫиме йурӑхсӑр, мӗншӗн тесен тутлӑ мар, тата унтан усал шӑршӑ кӗрет. Куртӑри ӗнтӗ, келикконитӑсемшӗн вӗсем вӑрахӑн (васкамасӑр) вӗҫни, тата ђакӑр тӗс пит усӑллӑ, мӗншӗн тесен кайӑксем вӗсене ҫав паллӑсенђен пӗлеҫҫӗ те, тивмеҫҫӗ.



35-мӗш ӳкерђӗк.—Келикконитӑ (ҫӳлте), ун майлӑ лепталис (айалта).

Келикконитӑсем пурӑнакан вырӑнтах тата тепӗр ӑратӑ лӗпӗсем пур. Вӗсене лепталиссем теҫҫӗ. Лепталиссене те келикконитӑсен хушшинђе тӑтӑшах курма пулаӑ. Вӗсен ӳкерђӗкӗсем ҫине пӑхас, йе хӑйсене куҫпа курас тӑвас пулсан, епӗр вӗсене нийепле те пӗрисенђен тепӗрисене уйӑрайас ҫук. Пуринђен ытла вӗҫнӗ ђух уйӑрма хӗн. Анђах вӗсене уйӑрса паллайманни—упаран пуйвӑла, йе сыснаран ҫурӑха уйӑрайманнипе тан. Каллех ним тума та ҫук, ирӗксӗрех йӑнӑшмалла пулаӑ, мӗншӗн тесен лепталис пысӑккӑшӗпе,

формипе, çунађёсене сăрланă тĕсĕпе тата кăмăлĕпе те келикконитă пекех. Мĕн тума кирлĕ пулнă-ха ĕнтĕ ку лĕппе йут тумтир – тепĕр лĕпĕн тĕсĕ, йе уйăрма та хĕн йевĕрĕ?—Акă мĕн тума. Лепталисăн ашĕ çиме йурăхлă. Кунта пĕтĕм çекрет та çавăнта анђах. Кайăксем лепталиссене келикконитăсем вырăнне хураççĕ те, тĕкĕнмеççĕ. Ку лĕпĕсемшĕн каллех аван.

Хурт-кăпшанкăран пуçне йут тумтирпе пурăнакансем (ряженые) ытти ђĕрĕ йапаласем хушшинђе те пур. Акă, сăмахран, çĕленсенех илер. Вĕсем хушшинђе—сăхсан вĕлерекенĕсем те, вĕлерменнисем те пур. Анђах есĕр тепĕр, сăхсан вĕлерекен, çĕлене вĕлерменнинђен нийепле те уйăрса илейес çук, мĕншĕн тесен унăн тирĕн çийĕнђи хупписем, тата ытти паллисемпе те сăхсан вĕлермен çĕленĕн пекех. Мĕн каламалли пур: çав çĕленсен пурăнăçĕ тепĕрисенђен аванрах, мĕншĕн тесен, вĕлерекенсен вырăнне хуни, вĕсене тепĕр ђух тăшманран хăтарать.



36-мĕш ӳкер.—Офтаљмис (çӳлте)—ашĕ çиме йурăхсăр лĕпĕ, артакса (айалта)—ашĕ çиме йурăхлă лĕпĕ.

Вĕçен кайăксем хушшинђе йут тумтирлисем йышлах мар, анђах йут тĕс кунта та пур. Вăл хăравçă, хӳтлĕхсĕр тата вăйсăр к а й ă к с е н е тăтăшах тăшманран сыхлать. Уйăпа*) курнă çын унăн тĕсне-пуçне аван пĕлет. Анђах вĕсем те пур вырăнта та пĕр тĕслĕ мар. Тĕнђери тепĕр вырăнта уйăпсем пађах ђипер мар, анђах çав ђипер мар тĕс тăтăшах вĕсене тăшманран сыхлать. Тата çавăнтах, ђипер мар уйăпсем пурăнакан вырăнта, метосос йатлă| кайăксем пурăнаççĕ. Вĕсем пит хăйуллă тата вăйлă кайăксем. Хăйсен тăшманне курсан, вĕсем ун çине парттипе (ушкăнпа) кăçкăрса пăрахăнаççĕ, тата кирлĕ пулсан хăйсен кукăр вĕçлĕ сăмсисемпе урисенђи вăйлă ђĕрнисене те ĕçе кӳртеççĕ. Вара тăшманăн, çав тери ђăрсăр кайăксен патĕнђен, нимĕнсĕрех те пăрăнмалла пулать. Уйăпсем—кăмăлпа метосос текен кайăксем патне те пымаççĕ, анђах тĕсрен вĕсене лешсенђен уйăрса илме хĕн.

---

*) Уйăп—иволга.

Тепӗр ђух вӗсене кайӑксене ӑста пӗлекенсем те уйӑраймаççӗ. Каланинђен акӑ мӗн курӑнаҭ ӗнтӗ: уйӑпа метососсем хушшинђе тепӗр ђух хурђка, йе хӑлат пулаççӗ те пулӗ, анђах паллаймасӑр тытаймаççӗ.

Вӑхӑтлӑха ђӗрӗ ђунлӑ йапаласем çинђен йумахлама ђарӑнӑпӑр. Малалла ӳсекен çеçкесем çине куçça вӗсен йӑвӑр пурӑнӑç тавлашӑвӗ çине пӑхӑпӑр.

---

XII.

## Çеçкесен (ӳсен-пулансен) пурӑнӑç майлашӑвӗ.

Çеçке тымарӗсемпе тӑпра ӑшӗнђе лараҭ. Тымар çеçке валли тӑпра ӑшӗнђен тӗрлӗ апат-çимӗç туртакан йапала. Йӑвӑç-курӑк пурӑнӑçӗ çине пӑхсан, вӗсем тӗнђере ним тавлашусӑр пурӑнаççӗ пулӗ, теме те май пур пек туйӑнаҭ. Анђах ӗç урӑхла кӑтартаҭ: çеçкесем хушшинђе те пурӑнӑç тавлашӑвӗ тӑпра ӑшӗнђех тапранаҭ. Кашни çеçкешӗн тымарӗсем апат ытларах туртни усӑллӑ. Çавӑнпа вӗсем тымарӗсене тӗрлӗ майпа апат ытларах турттарттарма тӑрӑшаççӗ, тепӗр тӗслӗ каласан—чӗр май апатшӑн тавлашаççӗ.

Тӗрлӗ çеçкесен тымарӗсене курсан, епӗр хамӑртан хамӑр пӗрре мар ыйтнӑ пулӗ: мӗншӗн-ха кусен тымарӗсем пӗри вӑрӑм, тепӗри кӗске, тесе. Сӑмахран: тулӑн тымарӗсем хӗрлӗ кӑшманӗнђен ӑраснах уйрӑм; ӗçӗм çырли йывӑçӗн ун пек те, кун пек те мар. Малта калани—пӗр тӗслӗ тымар пур вырӑнта та, тата пур çеçкешӗн те пӗр пек усӑллӑ маррине пит аван кӑтартаҭ. Çемçе, кӑпкалатнӑ çӗр çинђе ӳсекен çеçкенӗн тымарӗсем нийепле те хытса ларнӑ, йе ђуллӑ çӗр çинђи çеçкесен тымарӗсем пек пулма пултараймаççӗ.

Сӑмахран илӗпӗр. Акӑ пирӗн умра навуспа кӑпкалатнӑ çаран тӑпри ӑшӗнђен çимӗç илекен тӗрлӗрен çеçкесен купи. Анђах вӗсен те кашниййӗн ӑрасна майлӑ тымар. Ку акӑ мӗншӗн апла пулмалла: çеçкесенђен хӑшӗ пӗри тамарӗсене тӑпра ӑшне тарӑн йамасан, çав вырӑнта пурин валли те çимӗç çитеймесси курӑнсах тӑраҭ; вара вӗсен хушшинђе те тавлашу тапранма пултараҭ. Анђах çеçкесем вӑл тӗлӗшрен ытти йапаласем пек мар, тавлашусӑрах çураçаççӗ: вӗсенђен пӗрисем хӑйсене кирлӗ çимӗçе тӑпранӑн çийелти сийӗнђен, тепӗрисем тарӑнарах, малтанхисем çитмелле мар, вырӑна кайса илеççӗ. Кӗскенӗн

каласан, кашни ҫеҫке хӑйӗн тымарӗсене йепле те пулса тӑпрари ҫимӗҫе ытларах илме майлат҆. Ҫавӑнпа пӗр тӗслӗ куракӑн тымарӗсем кӗске, тепӗр тӗслисен вӑрӑм пулаҫҫӗ.

Тӑпраран илнӗ апатран пуҫне ҫеҫкесене тата ҫутӑ кирлӗ. Ҫутӑна ҫеҫкесен ҫулҫисем туртаҫҫӗ*). Акӑ малалла ҫеҫкесенђен хӑшне пӗрне илсе тӗплӗрех пӑхар-ха! Йепле лараҫҫӗ вӗсен ҫинђи ҫулҫӑсем?—Вӗсем тунапа туратсем ҫинђе, йури тунӑ пек, пӗрне пӗри тӗттӗмлемелле мар лараҫҫӗ. Ҫапла ларни вӗсемшӗн пит усӑллӑ, мӗншӗн тесен апла ларнипе ҫеҫ вӗсем хӗвел ҫуттине ытларах туртма пултараҫҫӗ. Каланинђен ӗнтӗ—ҫеҫкесем кунта та пурӑнма майлашни курӑнат҆. Анђах ҫутӑпа та вӗсем пӗр пек усӑ кураймаҫҫӗ. Пӗрисем вӑл тӗлӗшрен аванрах вырӑн йышӑннӑ, ҫавӑнпа вӗсен пурӑнӑҫӗ те теприсенђен лайӑхрах.



36-мӗш ӳкерђӗк.—Непентес ҫулҫи.

Ҫулҫӑсем ҫеҫкенӗн пурӑнӑҫӗнђе ӑна пит пысӑк усӑ кӳреҫҫӗ. Ҫеҫке ҫулҫӑсемпе сывлат҆; ҫулҫӑсемех—ҫеҫке тӑпраран тымарӗсемпе туртнӑ ђӗрӗ апата ӗҫлесе ҫеҫкене йурӑхлӑ ҫимӗҫ тӑваҫҫӗ; вӗсемех йулашкинђен ҫеҫкери ытлашши пухӑннӑ нӳрӗке (шыва) сывлӑша кӑлараҫҫӗ. Кашни ҫулҫӑн пит йенӗнђе, ахалђ куҫа курӑнми, пӗђӗкҫеҫҫӗ шӑтӑк нумай. Вӗсене вырӑсла устйитсы теҫҫӗ. Ҫав шӑтӑксем кирлӗ вӑхӑтра уҫӑлма та, хупӑнма та пултараҫҫӗ. Вӗсем уҫӑлса хупӑнни мӗне кирлӗ тейӗр есӗр?—Акӑ мӗне кирлӗ. Уйар ђух тӑпрара та, ҫеҫкере те нӳрӗк сахаллансан, ҫулҫӑ ҫинђи устйитсӑ текен шӑтӑксем ҫирӗппӗн хупӑнаҫҫӗ. Ҫапла тунипе вӗсем ҫулҫӑсенђи нӳрӗке кӑлармаҫҫӗ. Тӑпрара нӳрӗк нумай ђух, ҫеҫкесем ӑна ытлашши сыхласа усрамаҫҫӗ: шӳсе аслӑланнӑ шӑтӑксенђен ытлашши шыва пӑспа кӑлараҫҫӗ. Ҫак йапала, ун ҫине ҫийелтен анђах пӑхсан, нимӗн те мар пек туйӑнат҆, анђах, тӗплӗрех шутласан, вӑл пит хаклӑ, кирлӗ йапала. Ҫеҫкесен ҫулҫисем малта асӑннӑ шӑтӑксемсӗр пулнӑ пулсан, вӗсене пурӑнма, пуринђен ытла уйар вӑхӑтра, пит хӗн пулнӑ пулӗђђӗ.

*) Лужкевиђ ҫырнӑ „Йывӑҫ-курӑк (Симӗс патшалӑх)“ йатлӑ кӗнекере кун ҫинђен тӗплӗрех каланӑ.

Çапла, çулçăсен ĕç нумай. Вĕсем те хăйсем çине хунă ĕçе вăй çитнĕ таран тăваççĕ. Анђах ĕмĕр пурăнасси уй урлă каçасси мар. Тĕнђе хăш йышши çеçкесен пурăнăçне ытлашшипех йăвăрлатнă: вĕсен çине малта кăтартнинђен пуçне тата урăх сунман ĕç хунă.

Шурлă, тылла-пуççиллĕ тăпра çинђе, йе лађакасенђе хурт-кăпшанкăна тытакан çулçăллă çеçкесене тĕл пулма йурат. Вăл çеçкене вырăсла „мухоловка“ теççĕ; ђăвашла шăнатытан теме йурат. Шăнатытанăн çулçисем ђăнах та хăй çине ларнă хурт-кăпшанкăна тытма пултараççĕ. Тытас ĕç çапла пулат: икĕ çурмалла пайран тăракан çулçăсем, хăйсем çине шăна-пăван, йе тата урăх хурт-кăпшанкă ларсанах, пĕр çĕре çыпăçса лараççĕ.


37-мĕш ÿкер.—Роççанккă.

Тата тепĕр непентес йатлă курăкăн çулçисем хупăлђаллă. Хурт-кăпшанкă пырса ларсанах, вĕсем хупăнса лараççĕ. Виççĕмĕш — роççанккă йатлă курăк пĕтĕмпех çÿçсемпе витĕннĕ. Ун çине хурт-кăпшанкă ларсанах, вăл вĕсене, танатана карнă пек, çÿçĕсемпе карса илет. Çав курăксем пур те хăйсем çине лекнĕ ђĕрĕ йапалана малтан вĕлереççĕ, унтан вĕсенђен çимĕç туса çемçе, çиме йурăхлă, пайĕсене сăхса илеççĕ.

Типĕ вырăнти курăк çулçисем ку ĕçе тума пĕлмелле пек те мар, анђах лађакари (шурти) курăксемшĕн вăл ĕç ытлашши йăвăр мар. Акă ĕнтĕ мыскара! Пурăнсан мĕн курса илтмĕн! — Курăксем хăйсен пурăнăç формине улăштарса ђĕрĕ ђунлă йапаласем пек хырăмлă пулса тăнă. Анђах кунран та ытла тĕлĕнме кирлĕ мар: çав курăксен пурăнăç йĕркине нуша улăштарнă, мĕншĕн тесен лађакара вĕсем валли тутă тытакан апат урăх çук, выçă пурăнмалла мар*).

*) Кун çинђен тĕплĕрех пĕлес текенсене „Харам пырлă тата тискер пурăнăçлă çеçкесем“ çинђен Лункевиђ çырнă кĕнекене вулама канашлатпăр.

Ку таранђен çеçкесем çинђен халаплантăмăр, малалла тата çеçкесен уйрăм пайĕсем çине пăхса вĕсем мĕн туни çинђен висçĕ сăмах калар. Епĕр йывăç-курăк ђеђекпе йышлăланнине (ĕрђенине) пур те аван пĕлетпĕр. Ђеђекрен вăрлăхлă çимĕç пулаť, вăрлăхран çĕнĕ йывăç-курăк (çеçке) çитĕнет. Çимĕç — ђеђекĕн пеçтик тейекен пайĕнђен пулаť. Анђах пеçтик хăй ĕссĕнех, тепĕр тĕслĕ каласан пĕђђен вăрăллă çимĕç тăваймасť. Вăл ĕçре ăна ђеђекĕн тепĕр паха тыђђинккă тейекен п а й ĕ пулăшаť. Çав тыђђинккă тенĕ йапаланăн тăрринђе пĕђĕкçĕ хутаçсем пур, хутаçсенђе вĕтĕ тусан (цветочная пыль). Çав тыђинккă çинђи тусанăн темиçе пĕрђи пеçтикăн тути çине савĕç тейекен вырăна, ўксен тин; тепĕр тĕслĕ каласан —икĕ йапала, тыђђинккăпа пеçтик сыхăнсан тин, йывăç-курăк çинђе çимĕç (п л о д) пулаť. Ђеђекĕн асăннă йапаласем сыхăçăнман пулсан, вăл ђеђек çимĕç кўреймест, çавăнпа ун пек ђеђеке: пушă ђеђек т. т. каласан пуса, теççĕ.




38-мĕш ўкер.—Ђеђекĕн пайĕсем—I) пĕтĕм ђеђек; II) тыђђинкăсемпе пестиксем (ђеђекĕн çунађĕсене татнă); s—тыђђинккă, д, п—пеçтик. III-IV) Икĕ тыђђинккă: f—тунисем, a—тусанĕсем.

Нумай йывăç-курăкăн ђеђекĕсем çинђе, сăмахран: пухранăн, мăкăнĕн, квоçтиккăн, лилийĕн, лантăшăн, пиçенĕн, утмăл туратăн тата сайра урăхĕсен те вăрă тăвакан пеçтикпе тыђђинккă харпăр хăйĕннех пулаççĕ. Шутласан, çав курăксен ђеђекĕсем сыхăçса вăрă тăвас ĕçшĕн айакка каймалла мар пек туйăнаť, мĕншĕн тесен кашни ђеђекĕнех пеçтик те, тыђђинккă та пур. Анђах пурăнăç ку ĕçре те хăй йĕркине хунă. Вăл йĕркеленипе пĕр ђеђек çинђи оркăнсен, пеçтикпе тыђђинккăн, пĕрлешме йурамасť; урăх хăйсемпе пĕр йатлă, ђеђек çинђи йапаласемпе анђах пĕрлешме йураť. Ђăнах та, ђеђексем çав йĕркерен тухмаççĕ. Мăкăђ, квоçтиккă, утмăлтурат, лили тата урăхĕсем те вăй-хăват çитнĕ таран хăйсемпе кўршĕллĕ тăван ђеђек çинђи тусанпа пĕрлешме тăрăшаççĕ. Мĕн усси пурха ĕнтĕ ку ĕç апла пулнинђен? Мĕншĕн вĕсем

хăйсенне тиркесе килте пур йапалашăн ирĕке тухаççĕ? тейĕр есĕр.—Пĕтĕм ĕç акă мĕнре тăрат: пеçтик, хăйпе пĕр тăван килти тыђђинккă çинђи тусана йышăнмасăр, çав йапалана айăкри хăйпе пĕр ăратă ђеђек çинђен илсен, унăн çимĕçĕ шултăра тата лайăх вăрлăхлă пулат; килтипе, хăйне пĕр ђеђек çинђе йунашар лараканĕпе, çыхăçсан, çимĕç пађах пулмасть, йе пулсан та пит нађар, пушă вăраллă анђах пулма пултарат. Çапла, пĕр ђеђекĕн тусанĕ тепĕр ђеђек çине куçни —вĕсемшĕн пит усаллă йапала.



39-мĕш ўкерђĕк.—Хурт-кăпшанкă ђеђексем çинђен тусан пуçтарат.

Камха çав тусансене ђеђек çинђен ђеђек çине куçараканӗ?—Акă кам: ђеђексем çурăлнă вăхăтра çаран çинђе йе йывăç пахђинђе шуђĕ те çук—тĕрлĕрен лĕпĕ, çăмлă ураллă тĕклĕ турасемпе пыл хурђĕсем, нăрăсем, вăрăмтунасем, тĕрлĕрен шăна тата тĕрлĕ хурт-кăпшанкă ђеђек çинђен ђеђек çине вĕçнине (куçнине) пур те курнă. Çавă шута илме май çук çар, хăй мĕн тунине пĕлмесĕр, ђеђексен тусанне пĕр ђеђек çинђен тепĕр ђеђек çине куçарат. Вăл ĕç çапла пулат: хурт-кăпшанкă пĕр ђеђек çинђен пылпа тусан (перга) илнĕ ђух, хăй те сисмест, унăн тусанне—пуçĕпе, урисемпе, çунађĕсемпе пуçтарса тухат; тепĕр ђеђек çине ларсан, çав тусан,

сисмен хушăра, ун çине тăкăнса йулат̆, тепĕрин каллех малалла куçат̆. Çак ĕçе хурт-кăпшанкă никам хупăрламасăр тăват̆, анђах унпа вăл хăй илнĕ пылпа тусаншăн ђеђексене пит пысăк усă кỹрет. Куртăри ĕнтĕ, никам хупăрламасăр тумасăр тĕнђере пысăк ĕç пулса тăрат̆! Хурт-кăпшанкă хăй илнĕ пылшăн ђеђексене, хăй те сисмест, тусан куçарса ырăлăх тăват̆!

Малалла каллех тепĕр ыйгу тухат̆. Мĕнрен пĕлеççĕ-ха хурт-кăпшанкăсем йăвăç-курăк çинђе вĕсем валли апат пуррине?—Акă мĕнрен. Кашни çеçке вĕсене хăй çине хăйĕн



40-мĕш ỹкер.—Хурт-кăпшанкăсем ђеђексем çинђен тусан илеççĕ.

илемлĕ, ђипер тĕслĕ çунатлă ђеђекĕсемпе, тата тутлă шăршипе ђĕнет. Кĕскекĕн каласассăн: ђеђек çинђи тутлă пыл, ђакăр хĕрлĕ, йе тата урăх тĕслĕ ђеђек пуçĕсем—хурт-кăпшанкăна астаракан йапаласем. Çавă çеçкесем: тĕлĕнмелле ырă тата тутлă шăршăллă лантăшпа фиалккă, кăвак тĕслĕ утмăл-турат, сарă љуттик, хĕрлĕ тĕслĕ хир пăрçи, тутлă пыл паракан ђавка-пуçĕ, хура тул, шаçмин тата квоçтиккă—пурĕ те, етем кăмă-лĕшĕн, вăл вĕсен илемĕ çине пăхса савăнасшăн тĕнђене çуралса пулман. Кам çапла шутлат̆, вăл йăнăшат̆. Ђеђекĕн çынпа мĕн ĕç пур? Ђеђексен хăйсен инттересĕ, хăйсен ĕмĕђĕ.

Вĕсем хурт-кăпшанкăна астарса хăйсем çине лартасшĕн анђах ђипер те илемлĕ, тата шултăра пулнă. Тĕнђере хурт-кăпшанкă пулман пулсан, çуркунне—уйсенђе, йывăç пахђисенђе, сăрт хĕррисенђе, вар хушшисенђе тата вăрмансенђе çав тери илемлĕ ђеђексем пулас та çук.

Анђах тĕнђери пур йăвăç-курăкăн тусанне те хурт-кăпшанкă куçармасть. Нумай йăвăç-курăкăн тусанĕ çилпе куçать. Ун пеккисем: йуман, çирĕк, вĕтрен, кантăр, хыр, ђăрăш тата урăхĕсем те. Çиле астаракан кирлĕ мар, çавăнпа вăл куçаракан йывăç-курăкăн ђеђекĕсем те ђипер мар. Çил нихăшне те, тиркеместь. Уншăн-ђиперри те, усалли те; тутлă шăршăлли те, усал шăршăлли те; пыллипе пылсăрри те пĕрех. Ăна йапала (парне) парса хăна майлă çавăрма çук: вăл асăрхаман хушăра килсе, çурăлнă ђеђеклĕ йывăçсем çийĕпе кашласа кайнă ђух, тыђђинккăсем çийĕнђен хăпса (уйăрăлса) çăмăл пĕлĕт майлă хăпарнă тусана айакка илсе кайса ăçта ӳкнĕ унта салатать. Çав тусансенђен хăшĕ пĕри хăйне пĕр ăратăллă йывăç-курăк ђеђекĕ çине ӳксен, вара пит телейлĕ: вĕсем çыхăçса вăрăллă çимĕç кӳме пултараççĕ. Ђеђексен тусанĕсене çил мĕн ђул нумайрах (йышлă) вĕçтерсе кайать, ђеђексем çавăн ђул ытларах пĕтĕçессе ĕмĕтленме йурать. Çавăнпа илемсĕр, хурт-кăпшанкă ларман, ђеђек çинђе ђиперри çинђинђен тусан кирек хăçан та ытларах, мĕншĕн тесен унăн тусанĕ çилпе çеç вĕçнĕ ђух пит нумай усăсăр пĕтме пултарать.



41-мĕш ӳкер —Каврăç турађĕ. Ун çинђе вĕтĕ ђипер мар ђеђексем.

XIII.

## Татах йываҫ-курӑк хушшинђи пурӑнӑҫ тавлашӑвӗ ҫинђен.

Ђеђекрен ҫимӗҫ пулсан, ҫеҫкесен каллех урӑх ӗҫ шухӑшӗ тапранаҭ. Вӗсен хӑйсем ҫинђи ҫимӗҫе—ҫимӗҫпе унӑн вӑррисене ҫийекен кайӑксенђен, тата ытти ђӗрӗ йапаларан та сыхламалла пулса тӑраҭ. Сыхлас ӗҫ ҫӑмӑл мар, мӗншӗн тесен ҫимӗҫпе унӑн вӑррине ҫийекен ђӗрӗ ђунлӑ йапаласем хушшинђе пит йышлӑ. Анђах тӗнђе ҫак ӗҫре те ҫеҫкесене хӑй нумай пулӑшаҭ. Сӑмахран—ҫимӗҫсенђен нумайӑшӗ пиҫсе ҫитсен те симӗссипех йулаҫҫӗ. Симӗсӗн йулни вӗсемшӗн пит паха, мӗншӗн тесен ҫулҫӑсен симӗс тӗсӗ вӗсене тӑшманшӑн палӑрми тӑваҭ.

Нумай ҫимӗҫӗн, хӑйне ђӗрӗ йапаласенђен сыхлас тӗлӗшпе, урӑх йышши хӳтлӗхсем те пур. Тӗслӗх—мӑн мӑйӑрпа (греческий орех), каштан тейекен ҫимӗҫсене илер. Вӗсенђен пӗри ҫийелтен хытӑ хупӑпа витӗннӗ, хупӑ ҫинђе каллех симӗс тӗслӗ, усал шӑршӑллӑ куршанкӑ пур; тепӗрин, каштаны тенин, ҫав куршанкӑ вӗтӗ йӗплӗ. Ҫавӑнпа—мӑн мӑйӑр хуппин (куршанкӑн) усал шӑрши, тата каштанӑн ҫивӗђӗ йӗпписем вӗсене май килнӗ таран ђӗрӗ ђунлӑ йапаласенђен сыхлаҫҫӗ. Тата ҫак асӑннӑ ҫимӗҫсеннех, пиҫсе ҫитсе ҫӗре ӳкес вӑхӑта, тӗсӗсем хӑмӑрланса ҫӗре тӑкӑннӑ ҫулҫӑ йеверлӗ пулаҫҫӗ. Вара вӗсене ҫӗр ҫинђе те асӑрхаса илме ҫӑмӑл мар.

Ҫапла сыхлаҭ хӑйне тӑшманран пӗр тӗслӗ йываҫ-курӑк, тепӗрисем хӑйсем ҫине ђӗрӗ йапаласем йуратмалла мар формӑ илеҫҫӗ. Сирӗнтен кӑпђан йываҫа курман ҫын ҫук та пулӗ. Унӑн ҫимӗҫӗ пиҫсе ҫитсен тађах ус (клещ) тӗслӗ пулаҭ. Кайӑксем вӗсене ус вырӑнне хунипе тӗкӗнмеҫҫӗ.

Ҫавнашкал хӳтлӗхех Интира ҫитӗнекен хыр йӗкелӗн пур. Вӑл каснӑ-лартнӑ нӑрӑ тӗслӗ; ҫавӑппа ӑна пит тӗкӗнекенех ҫук, мӗншӗн тесен вӑрӑпа тӑранакансемшӗн нӑрӑ питех те кирлӗ мар.

Тата йываҫ-курӑк вӑррисенђен хӑшӗ-пӗри ђӗрӗ йапала тӗслӗ пулнӑ. Вӗсене, скорппионсем майлӑран скорппионник, тенӗ. Ђӑнах та, хӑш скорппионник каснӑ-лартнӑ скорппион хӳри пек; тепӗри—нумай уралла, йе шӑртлӑ хурт пек. Ҫавӑн тӗслӗ вӑрӑна тепӗр ђух хурт-кӑпшанкӑпа тӑранса пурӑнакан

кайӑксем сӑхса илеҫҫӗ, анҕах йӑнӑшнине сиссенех, ҫӑвартан кайалла кӑларса пӑрахаҫҫӗ.

Каланинҕен акӑ мӗн курӑннӑ пек ӗнтӗ: йывӑҫ-курӑк вӑрришӗн ҕӗрӗ ҕун вӗсене асӑрхамалла мар пулни, тата асӑрхасан та тивменни аван. Анҕах йалан пӗр пек пулмасӑ, ҫавӑнпа: курӑннӑ пек, тетӗп. Тӗслӗх: аса илӗрха тӗнҕере мӗн ҕухлӗ ашлӑ, сӗтеклӗ, тутлӑ тата ытармалла та мар ҕипер тӗслӗ ҫимӗҫ ӳсет. Вӗсене курмасӑр иртсе кайма та май ҫук. Акӑ вӗсенҕен хӑшне пӗрне анҕах илӗпӗр: хирти йӗҫӗм ҫырли йывӑҫҫин ҫырли, ҫливӑ, хӑмла ҫырли, мӑк ҫырли, хурӑн ҫырли, хурлӑхан, пойарӑшнӗк тата урӑхӗсем те; вӗсем пур те ҫимелле йапаласем, вӗсене пурне те шутласа кӑларми таран вӗҫен-кайӑксемпе ытти ҕӗрӗ (сӗтпе ҫитӗнекен) йапаласем ҫисе пӗтереҫҫӗ. Анҕах вӗсем ҫисе пӗтернинҕен ҫимӗҫсене пӗр сийен те ҫук. Ҫимӗҫ кӳрекен ҫеҫкесем вӗсен ҫимӗҫӗсем ҕӗрӗ ҕунлӑ йапаласен хырӑмне кӗнӗшӗн хӗпӗртеҫҫӗ ҫеҫ. Вӑл мӗншӗн аплине епӗр халех малалла каланинҕен пӗлӗпӗр. Сирӗнтен ҫливӑпа йӗҫӗм ҫирлийӗн вӑррисене кам курман?—Пур те курнӑ. Вӗсем пит хытӑ хупӑллӑ. Хытӑ типсе хытсан,



42-мӗш ӳкер.—Скорпион-никӑн ҫимӗҫӗсем.

шӑмӑпа пӗрех пулаҫҫӗ: вара шӑл та витеймест. Ҫавӑн пек вӑрӑсене выҕӑх, йе ытти ҕӗрӗ ҕун хырӑмӗнҕе пӑртаклӑха хӑнара пулни пит те усӑллӑ: вӗсем хырӑмра шӳсе ҫемҫелеҫҫӗ те, ҫӗр ҫине кайашӗпе тухса ӳксен, ҫурӑлса тымар йараҫҫӗ. Кураттӑри? Кӗтмен хушӑра йепле кирлӗ ӗҫ пулса тӑрат?! Кам шутланӑ ҫавӑнтан усӑ пулассине! Хырӑмра—шултӑра ҫливӑ, йӗҫӗм ҫырли (кизиль) вӑррисем ҫех мар, хӑмла ҫырлийӗн, хурлӑханӑн, ҫӗр ҫырлийӗн тата урӑх ҫимӗҫсен вӑррисем те пӑсӑлмаҫҫӗ. Ҫапла—пӗр йышши йывӑҫ-курӑк хӑйне усӑшӑн хӑйӗн ҫимӗҫӗсем патне ҕӗрӗ ҕунсене йавӑҫтарма тӑрӑшат, тепӗрисем ҫав хушӑрах йури ҫиме йурами, йе куҫа палӑрмирех ҫимӗҫсем кӳреҫҫӗ.

Тепӗр ҕух епӗр—хӑмла ҫырлипе хурлӑхан йывӑҫҫисем, йе тата урӑхӗсем те ҫав тери тутлӑ ҫырласене ӳстернине кӳрсан: тӗнҕе етемшӗн ҫех тӑрӑшат, тесе шухӑшлама хатӗр.

Çук, апла шухăшлама кирлĕ мар, апла шухăшлакансем йăнăшаççĕ. Кунта етем вырăнђе вĕçен кайăксемпе тăвата уралла ђĕрĕ ђунсем тăраççĕ. Тĕрĕссипе каласан, пĕтĕм йывăç-курăк çийĕнђи çимĕç етем валли те, выђăх̆ валли те мар, хăйсем валли çех пулса тăрат̆. Çапла вĕсем ђĕрĕ ђун хырă-мĕнђе те хăйсене усăшăн анђах пулаççĕ. Мĕн тăвас тетĕн? Тепĕр ђух пуçа тем шухăш та кĕрсе тухат̆! Ку вăхăталла тин ĕнтĕ пирĕн хушăмăрти çавнашкал тĕрĕс мар шухăшсем ăслăлăх пулăшнипе пĕђĕккĕнех ирĕлсе пĕтеççĕ.



43-мĕш ӳкерђĕк.—Тĕпеклĕ çимĕçсемпе вăрăсем.




44-мĕш ӳкерђĕк.—Çунатлă çимĕçсем.

Акă, сăмахран калăпăр: пĕр йывăç çинђе çимĕçсем пиçсе çитнĕ. Çав пиçнĕ çимĕçсем йывăç çинђен ӳксе унăн кутĕнђех (таврашĕнђех) йулсан аван пулĕ-и?

—Аванни çук, пулас та çук. Акă, йуман çинђе темиçе пин йĕкел пулат̆. Вĕсем пур те çав йуман кутне ӳксе унтах йулсан, вĕсенђен шăтса тухнă йывăç сарăлса ӳссе çĕнĕ йывăç пулĕ-и?—Пулас çук. Тата йуман кутĕнђи пĕр пĕђĕк татăк çĕр темиçе пин çĕнĕрен шăтнă йывăçсене апат пама пултарĕ-и?—Пултарас çук. Çĕре ӳкнĕ йĕкелсем пĕринђен тепĕри айăккарахра пулсан, вĕсене нумай аван пулĕ: ун пек вĕсем пĕр пĕрне сахалтарах кансĕрлĕç. Ытти çимĕçсемшĕн

те ҫакӑ йӗркех (айӑккарах саланни) аван. Пӗр вырӑнта йулнинђен вӗсене усӑ сахал.

Ђӗрӗ ђунлӑ йапала йалан хӑйне усӑ ытларах кӳрекен йапала ҫумне ҫыпӑҫма тӑрӑшаť. Пӗрре йышӑнсан, вӑл ырӑлӑха алӑран вӗҫертмест. Асӑрхасан, йывӑҫ-курӑк хушшинђе те ҫавнах курма йураť. Пиҫсе (пулса) ҫитнӗ ҫимӗҫсене пӗр вырӑнта тӑвӑрланса тӑнинђен усӑ ҫук. Ҫавӑнпа вӗсенђен нумайӑшӗ—йе хӑйсем, йе вӗсен вӑррисем хӑйсене пултарнӑ



45-мӗш ӳкерђӗк.—Ђӗрӗ ђун ҫумне ҫыпӑҫма—сырӑнма пултаракан ҫимӗҫсем.

амӑшӗсенђен, ҫӑмӑллӑн айӑкка вӗҫсе ӳксе, тӗрлӗ ҫӗре саланаҫҫӗ. Тата ҫак ӗҫе тума (саланма) вӗсене тӗнђе хӑйех те пулӑшаť. Вӑл акӑ мӗнрен курӑнаť: пӗр йывӑҫӑн, йе курӑкӑн вӑрри мамӑклӑ (сар-ђеђек—отуванђђик). Мӗн тӑраť ҫилщӗн мамӑклӑ вӑрӑна айакка илсе кайса пӑрахма! Тепӗрисен: ҫӑканӑн, вӗрененӗн тата урӑхӗсен те—ҫунатлӑ. Кун пеккисене айакка илсе кайма пушшех ҫӑмӑл. Акӑ тата виҫҫӗмӗшсене илер: кусен ҫунат, йе мамӑк вырӑнђе йӗп, йе сырӑнакан йапала (куршанак). Ҫавӑнпа вӗсен пӗтӗм саланас ӗмӗт ђӗрӗ ђун ҫинђе. Ђӑнах та ун пеккисем асӑрхаман хушӑра тӑватӑ уралла ђӗрӗ ђун ҫӑмӗ йе кайӑкӑн тӗкӗ ҫумне ҫыпӑҫаҫҫӗ те, унпа пӗрле таҫта витрех саланаҫҫӗ. Тӑваттӑмӗшсен тата тӗлӗнмеллерех. Кусен вӑррисене ни ҫил, ни выђӑх-ђӗрлӗх

ни вӗҫен-кайӑк салатаймаст̆. Анђах пиҫсе, йе пулса ҫитсенех вӗсен ҫимӗҫӗсем сасартӑк шартлатса ҫурӑлса кайса вӑррисене айӑккалла, тӗрлӗ вырӑнсене, кӑларса ывӑтаҫҫӗ. Ҫапла хӑтланаҫҫӗ: урнӑ хӑйар тейекен ҫимӗҫ, тӑрна пӑрҫи, аккатси, кераҍ йатлӑ ђеђек, тата урӑхӗсем те.

Акӑ тӗрлӗ ҫӗре тӗрлӗ майпа саланнӑ вӑрӑсем вырӑн тупса шӑтса тухрӗҫ, ўсме те тытӑнђӗҫ. Анђах шӑтса тухнипех




46-мӗш ўкерђӗк·—Ҫеҫкесен хўтлӗх хатӗрӗсем—ђикекен туратсем.

ӗҫ пӗтмест, пӗтме май та ҫук. Ўсекен йывӑҫ-курӑкӑн тӑшманӗсене шутласа та кӑларайас ҫук. Йепле хӑтӑлас пулат̆-ха ӗнтӗ вӗсенђен?. Йепле майпа сивӗтес вӗсене? Ку ӗҫе тума питех те ҫӑмӑл пулас ҫук!—Ђӑнах та ҫӑмӑл мар. Анђах, апла пулсан та, ҫеҫкесем те хӑйсене тӑшмана: „на“, тесех памаҫҫӗ, вӑй ҫитнӗ таран сыхланаҫҫӗ. Вӗсенђен нумайӑшӗн хўтлӗх хатӗрӗсем те пур. Илерха сӑмахран йӗплӗ туналлӑ (шӑлан, аккатси тата урӑхӗсем те), йе йӗплӗ ҫулҫӑллӑ йывӑҫсемпе пӗҫертекен ҫулҫӑллӑ (вӗтрен) курӑксене. Вӗсемшӗн ҫав—

ђикекен, пĕçертекен йапаласем мĕншен хӳтлĕх мар? Тата хăш çеçкерен кĕрекен усал шăршă, çимĕçĕсен çиме йуратмалла мар тути, тепĕрне çисен вăл вĕлерме пултарни—каллех мĕншĕн хӳтлĕх хатĕрĕ мар çеçкешĕн? Тĕрĕссипе каласан, çеçкесен хӳтлĕх, сыхлăх хатĕрĕ ђĕрĕ ђунлă йапаласенђен ытлашши мар пулсан та, кайа мар. Малта каланинђен астуса илĕрха! Унта лĕпĕ, хăйĕн тăшманĕсене улталасшăн, сăпса çийĕнђи тумтир тĕсне; сăхман вĕтрен, выљăх çăварне кĕресшĕн мар, сăхакан вĕтрен тĕсне илеђђĕç. Татах астумастăр-и. Нăрă кайăк çăварне кĕрес мар тесе çулçă çинђи кайăк пăхĕ тĕслĕ пулнине!? Африккăра сых ĕçĕ тата тĕлĕнмеллерех. Унта хăш çеçкесем хăйсем ӳсекен вырăнти ђул тĕслĕ пулса тăни те сайра мар.

---

XIV.

## Йантăпа пурăнакансем *).

Çĕр çинђи ђĕрĕ ђунлă йапаласемпе çеçкесем хушшинђе, тĕрлĕ инкек-синкек пуснипе, пурăнăç хунă йĕркерен тухнă йышсем те пур. Ырăллĕ-усаллĕ, анђах çав ђĕрĕ ђунсем те авалтарах харпăр хăй алтăвăçĕпе тăранса пурăннă. Пурăннă çемĕн çимĕç тупас ĕç пит йăвăрланнă; вĕсен пурăнăç асапĕпе кирлĕ таран кĕрешме вăй-хăват çитми пулнă. Тĕрлĕрен нуша, выçлăх тата тăшмансем вĕсене йулашкинђен парăнтармаллипех парăнтарнă. Ирĕксĕрех кивĕ пурăнăç йĕркинђен тухса çĕнĕ майпа çимĕç шырамалла пулса тăнă. Нумайăшĕ çĕнĕ пурăнăç кӳнĕ вăрçăра пĕтнĕ, сахалăшĕ çĕнтерсе ун çине тухнă. Çаккăн хыççăн ĕнтĕ ирĕксĕрех ыйтас килет: йулнисене пĕтесрен мĕн çăлнăши? Мĕн май тупса ĕçе кĕртнĕ-ши?—Акă мĕн: хăйсен алтăвăçĕпе тăранса пурăнас йăлана пăрахса йантăпа тăранма пуçланă; тепĕр тĕслĕ каласан, тӳрĕлĕхе (честность) пăрахса намăслă майпа тăранма пуçланă. Çаплайăн туйăнат ку ĕç етемшĕн, анђах намăса пĕлеççĕ-и-ха—йыттăн ӳђĕ ăшне кĕрсе ларса унăн йунне ĕçекен ус, йе çын ăшне лекнĕ хăйу пек лаптак çӳрлçен?—Пĕлмеççĕ, пĕлес те çук.

---

*) Кун çинђен тĕплĕрех пĕлес текенсене: Йун ĕçекенпе ĕçлемесĕр çийекен ђĕрĕ ђунлă йапаласем çинђен, тата çынăнпе йантăран тăранса пурăнакан çеçкесем çинђен калапă кĕнекесене вулама канашлатпăр.

Кун пек ыйту кулăшлăн туйăнĕ, мĕншĕн тесен вĕсене етемрен никам та йантăпа тăранса пурăннăшăн намăслама пултарайас çук, тата намăсласан та лешсем ăна йышăнма пĕлес çук, т. т. каласан, туйас çук.

Куртăри ĕнтĕ?—Пурăнас ĕмĕт çинҫе тухакан тавлашу йантăпа пурăнакансене йепле майпа тĕнҫене кăларнă! Çав, йантăпа пурăнакансем, ҫĕрĕ ҫунлă йапаласем хушшинҫе нумай, анҫах сахал мар çеçкесем хушшинҫе те. Татах акă мĕнрен тĕлĕнмелле: кашни йантăпа пурăнаканăн ăна тăрантаракан хуçа пур. Вĕсене, йантăпа пурăнакансене, ăслăлăх пара çитсем тет; епĕр те малалла çав йатлах ҫĕнĕпĕр.



47-мĕш ўкер.—Лаптак çўрлçен.

Танлаштарса пăхсан, параçит хуçинҫен наҫар, вăйсăр йапала, анҫах наҫар пулсан та вăл хуçине сийен кўрет. Тепĕр параçитсем хуçанăн апатне туртса ĕмсе пурăннипе ăна пит пысăк сийен кўреççĕ. Сăмахран, çўрлçенех илĕпĕр. Вăл етемĕн пырши ăшне лекет те, етем ăша илнĕ апатăн пайĕпе усă курат̆. Пĕр çўрлçен ытла пысăк сийенех тăваймаст̆, анҫах пыршăра ун пекки темиçе теçеткĕ пулсан, ун пек сайра пулат̆, вĕсем етеме пит пысăк сийен кўме пултараççĕ, мĕншĕн тесен, вĕсем çын ăшĕнҫи апатăн пĕтĕм ырă-тутлă сĕткенне ĕмсе тăрса унăн сывлăхне тытса тăмаллăх апат хăвармаççĕ.

Йывăç-курăк çинҫи параçитсем çинҫен те çакнах калама йурат̆. Акă есĕр омелă йатлă çеçкене пур те пĕлеттĕр. Анҫах асăрханă-и—вăл ытти çеçкесем пек пурăнманнине? Вăл хăйне кирлĕ апата тăпраран туртас вырăнне тепĕр йывăç ăшĕнҫен туртат̆. Ку ĕç акă йепле пулат̆: омелă вăрман улмуççи йе крушшă йе тата урăх йывăç çине улăхса вырнаçат̆ те (сырăнат̆ те) çав йывăçăн хуппи айне хăйĕн тымарĕсене йарса унăн ҫĕрĕ сĕткенне туртат̆. Пĕр тĕмĕ омелă йывăçа нимех те тăваймаст̆, анҫах йывăç çийĕнҫе ун пек тĕмĕ темиçе теçеткĕ пулсан, ăна хăртма та пултараççĕ. Çакна майлă йапалах йĕтĕн çинҫе пулат̆.

Çӳрĕлçенпе омелă йĕркери параçитсем; вĕсене тăтăшах курма йурат; анђах параçитсем вĕсемсĕр те пит нумай. Харпăр хăй хуçанăн (йапаланăн) хăйне йатлă (тивĕçлĕ) параçит пур. Кашни ђĕрĕ ђун, йе çеçке хăй çине пĕр параçит, йе ытларах та тăрантарса пурăнма йышăнаҭ. Параçитсем, тăранса пурăнма çимĕç пулсан, вырăн тиркемеççĕ: пĕрисем— хуçийĕн тирĕ ăшне вăхăтлăха, тепĕрисем ĕмĕрлĕхе те кĕрсе лараççĕ. Вĕсенђенех—хуçанăн ăшне кĕрсе вырнаçса йантă



48-мĕш ӳкерђĕк.—Омелă хĕлле йывăç çинђе.

апатпа хватттерте пурăнаканĕ те нумай. Параçитсем— пыршăра, пĕверте, ӳпкесенђе, ашра, шăмăсенђе, ђĕрере, нимере—пĕр сăмахпа каласан, пур çĕрте те хăйсене валли вырăн тупса тăранса пурăнаççĕ; пурăннă хушăра хуçине темĕн ђухлĕ асап, инкек кӳреççĕ. Тепĕр ђух вĕсенђенех вилĕм те килет. Йывăç-курăк (çеçке) çийĕнђи параçитсем те малта асăннисенђен кайах йулмаççĕ. Вĕсем йывăçăн турађĕсем, тымарĕсем, çулçисем, ђеђекĕсем тата çимĕçĕсем çинђе вырăн тупса пурăнма тăрăшаççĕ. Тата тепĕр ђух-ђĕрĕ ђун çийĕнђи параçита çеçке çинђе, йе çеçке çинђине ђĕрĕ ђун çинђе курма пулаҭ. Тĕслĕх филокçерă йатлă вĕтĕ пыйтă пек кĕвене илĕпĕр. Вăл йĕçĕм çырли йывăçĕн тымарĕ çинђе пурăнса ăна пăсаҭ. Каланине майлах, анђах ахаљ куçа курăнман, пит вĕтĕ кăмпа йатлă ђĕрĕ йапаласем тăтăшах

етемĕн, йе выђăхăн ўђĕ çинђе пулма пултараççĕ. Тепĕр ђух ўт хушшине те кĕрсе пурăнаççĕ. Тата хăш ђух пĕр йышши парасит тепĕр йышши парасит çинђе пурăннине те курма пулаť. Пĕр сăмахпа каласан, парасситсем ăçта май килнĕ унта вырăн тупса йантăпа пурăнма тăрăшаççĕ.

Тĕнђе малтан кăтартса панă пурăнăç çулĕ çинђен тухса йантăпа пурăнма вĕреннĕ парасситсем çинђен каланипе епĕ сире вĕсен пурăнăçĕпе паллаштарасшăн пулмарăм, тата тепĕр хут ђĕрĕ ђунсемпе çеçкесем хăйсен пурăнăçне упрас ĕмĕтпе вăрçăна кĕртекен тĕрлĕ хатĕрсене çеç кăтартрăм.

---

XV.

## Ђĕннисем нумай та, суйласа илнисем сахал...

Ђĕрĕ ђунсемпе çеçкесене пурăнăç вăрçине тухма тĕрлĕрен вăрçă хатĕрĕ кам панă-ши? Ђĕрĕ ђунсем пăрахăнмалли, йе хўтĕленмелли тĕрлĕ хатĕрсене ăçтан илнĕ-ши? Сыхлакан тĕс йепле пулса тăнăши? Ђеђексен ђакăр хĕрлĕ, йе тата урăх тĕслĕ пуçĕсем йепле пулма пĕлнĕ-ши? Тата йепле пулнă-ши—йĕплĕ (ђикекен) çулçăллă, туналлă çеçкесем, çисен вĕлерекен курăксем, сырăнакан çимĕçсем? Шутласа тухнă ыйтусене хирĕç тĕрлĕ çын тĕрлĕ ответ панă, анђах пуринђен те тĕрĕссине нумай вĕреннĕ, пит ăслă Тарвин йатлă çын панă. Малалла ĕнтĕ епĕр çав вĕреннĕ çын мĕн каланине итлесе пăхăпăр. Пуçласса çăмăлтараххинђен пуçлăпăр: ун пек ăнланмалларах пулĕ. Акă сăмахран калăпăр: пĕр вырăнта ађи-пăђисене (çурисене) сĕтпе (тăрантарса) ўстерекен ђĕрĕ йапаласем пит ĕрђесе кайнă та, вĕсене апат çитми пулнă. Никамăн та выçă вилес килмен, пур те вăй çитнĕ таран апат шырама тăрăшнă. Вĕсенђен нумайăшĕ, тахçанранпа тапранмасăр пурăннă вырăнсене пăрахса, çурçĕр йеннелле сулăннă. Анђах кунта вĕсене çĕнĕ инкек-синкек кĕтнĕ. Çурçĕр йенĕ сивĕ вырăн; тепĕр ђух унта вăйлă шатлама сивĕсем вăрăммăн тăраççĕ. Çакă сивĕ ăшша вĕреннĕ ђĕрĕ йапаласемшĕн пит те ырă йапалах пулман. Çĕнĕ вырăна куçнă ђĕрĕ ђунсен ĕређĕсем (шуђĕ) сайралнăçем сайралнă. Вĕренменскерсем сивве ђăтаймасăр вилнĕ. Анђах пур те вилмен пулас, мĕншĕн тесен çурçĕр йенђе пурăнакан ђĕрĕ ђун халĕ те нумай. Апла кам хăтăлса йулнă вилĕмрен?—

Кам куçаҫҫен курман, хăнăхман сивве ҫăтнă, çавă йулнă. Тепĕр тĕслĕ каласан—камăн çийĕнҫе çăм сахалтарах пулнă, вăл ҫăтайман—вилнĕ. Çăра çăмлисен аҫисем те хăйсем пекех çуралнă, анҫах сайра вĕсем хушшинҫе сайрарах тата кĕскерех çăмлисем те пулнă. Ун пеккисем каллех сивве ҫăтайман, вилнĕ. Çапла вара ăшă кĕрĕклисен (çăмлисен) шуҫĕ çултан çул йышлăланса пынă; йакисен, йе сайра çăмлисен, шуҫĕ çултан çул сахалланнă. Темиçе ĕмĕр (çĕр çул) иртнĕ, çуралса вилнĕ сыпăксем те çĕршерĕн шутланнă; çурçĕр йенҫи çĕр çинҫе ăшă çăмлă ҫĕрĕ ҫунсем анҫах йулнă. Вĕсем халĕ те пурăнаççĕ; вĕсене вырăсла: „пушные звери,“ теççĕ. Вăл ҫăвашла: ăшă, çемçе çăмлă тискер кайăксем тени пулаť. Каланинҫен акă мĕн курăнаť ĕнтĕ: çурçĕр йенҫе пурăнакан тискер кайăксем çĕр çине тухсанах (çуралсанах) ăшă çăмлă пулман; вĕсем малтан хăйсемпе пĕр тăван ăшă вырăнсенҫе пурăнакан ҫĕрĕ ҫунсенҫен нимĕнпе те уйрăм пулман, çурçĕр йенне куççан тин улăшăннă. Тата унта та улăшас ĕç (ăшă çăмлă кĕрĕк тăхăнас ĕç) ҫас пулман: улăшаҫҫен темиçе ĕмĕр иртнĕ.

Тата тепĕр тĕслĕх илĕпĕр. Епĕр малта сапаланса выртакан ҫулпа витĕннĕ хăйăрлă тӳрем вырăнсенҫе те çавăнти тăпрапа (хăйăрпа) ҫулсем тĕслĕ кайăксемпе калтасене курсаттăмăр. Вĕсемшĕн усăллă тĕслĕ тумтир кам тăхăнтартнă-ши вĕсен çине? Вĕсем вăл тĕсе хăйсем тума пултарайман вĕт! Тата сирĕнтен кам илтнĕ: кайăк хăй çийĕнҫи тумтирĕн тĕсне кирлĕ пулсанах улăштарма пултараť? тенине. Ун пек пулмалла мар ĕç çинҫен есĕр кама каласа ĕнентерĕр!—Ирĕккĕн, тата кăмăллăн çири тумтире улăштарма, т. т. каласан, пĕр тĕслине хывса пăрахса тепĕр тĕслине тăхăнма—кайăк та, калта та, йе тата урăх ҫĕрĕ ҫун та пултараймасť. Ку ĕçе тĕнҫе хăй анҫах тума пултараť. Вăл анҫах хăйĕн аҫи-пăҫине тĕрлĕ вырăнта, тата тĕрлĕ вăхăтра мĕн тĕс кирлине пĕлсе пама пултараť. Тĕнҫе ку ĕçе йепле тунине малалла тĕплĕрех пĕлĕпĕр.

Хăйăрлă, тата ҫуллă тӳрем вырăнсенҫе те такçан тĕрлĕ кайăксемпе калтасем пурăннă пулас пулаť. Çав вăхăтра вĕсен çийĕнҫи тумтирсем те пит тĕрлĕ пулнă: пĕрисене айăкранах курса палламалла пулнă, тепĕрисене çывăхран курсан та паллама хĕн пулнă. Анҫах çунатлă (вĕçен кайăк), йе тăватă уραллă тискер кайăксен аллине пур те леккеленĕ. Пуринҫен

ытла тăшман аллине тăшмана асăрхайман çамрăк ђĕпĕсемпе çурăсем лекнĕ. Çаккăн хыççăн ирĕксĕрех ыйтас килет: тăшман аллине мĕн тĕслисем ытларах лекнĕши? тесе.—Кам хăйĕн çийĕнђи тĕкĕн, йе хуппин тĕсĕпе паллăрах пулнă, вăл ытларах лекнĕ.

Ĕрђес ĕç—йĕрке пурин хушшинђе те пулнă, анђах тумтирĕсемпе паллăраххисен шуђĕ çултан çул сахалланса пынă хăйăрпа ђул тĕслисен йышлăланнă. Çапла пĕрисемшĕн—пурăнасси çăмăлтарах, теприсемшĕн—йăвăртарах пулнă. Çавăнпа пĕрисем сахалтарах пурăннă, тепĕрисем ытларах пурăнса ађа-пăђа (çурă-ђĕпĕ) йышлăрах хăварнă. Асăрхарăр-и ĕнтĕ: çакăнта та çурçĕр йенне куçса пĕђĕккĕн нумай ĕмĕр тăршшĕнђе суйланса йулнă тăватă уреллă ђĕрĕ ђунсем хушшинђе пулнă ĕçех куратпăр. Ђăтса пурăнма май тупайманнисем вилсе пĕтнĕ, пушă хирти ђулпа хăйăр тĕслĕ пулма пултарнисем халĕ те пурăнаççĕ. Çапах та çурçĕр йенђипе кăнтăр йенђи, хăйăрпа ђуллă вырăнсенђи, суйланусем хушшинђе уйрăмми пур. Çурçĕр йенђи ђĕрĕ ђунсем сивве ђăтаймасăр хăйсем пĕтсе пынă, кунта (пушă хирте) аван палăраканĕсене тискер кайăксем суйласа пĕтерсе пынă. Кам та пулсан тен: пушă хирти çунатлă, йе тăватă уреллă тискер кайăксем пит палăрман ђĕрĕ ђунсене ытларах йуратнипе тĕкĕнмен пулĕ, тейĕ. Çук, апла шухăшлакан йăнăшать. Кунта йуратасси тăвасси пулман: асăрхайман пирки çеç йулнă. Тата суйлас ĕç те пĕр-икĕ çул хушши мар, йĕркерен пит нумай çул хушши пулса пынă. Йулашкинђен вара пушă хирсенђе те унти хăйăрпа ђул тĕслĕ вĕçен кайăксемпе калтасем çеç тăрса йулнă. Çаплах пулса тăнă çурçĕр йенђи тискер кайăксен шурă тĕсĕ, çаплах пулнă ĕмĕр симĕс тăракан вăрмансенђе пурăнакан ђĕрĕ ђунсен тĕсĕ, çаплах пулнă тĕттĕм пулнă вăхăтра, тата çĕрле ĕçе тухакан ђĕрĕ ђунсен тата урăхĕсен тĕсĕсем те. Çаплах пулса тăнă пурăнăçăн тĕрлĕ вăрçă хатĕрĕсем те.

Малалла епĕр тĕрлĕ тĕслĕ ђакăр ђеђексен çулçисем йепле пулнине çийĕнђен те пулин пăхса тухăпăр. Малтанах ку ĕç куçа çăмăллăн пулнă пек курăнать, анђах, тĕплĕрех шухăшласан, ђас тата çăмăллăн пулманни аван палăрать. Çапах та епĕр ку кĕнекере ун çинђен ытлашши нумай çырмастпăр; тĕплĕрех пĕлес текенсене Лункевиђ ун çинђен ăрасна çырнă кĕнекесене вулама канашлатпăр.

Сăмахран калăпăр: акă епĕр сирĕнпе çаран çинђе тăратпăр. Пĕтĕм çаран ђеђексемпе тулли. Ђеђексем хушшинђе—ђакăр ђипер тĕсĕпе астараканĕ ытлашши нумай мар, анђах сайра курăнкалаť. Çаран çинђе вĕçекен лĕпĕсем, нăрăсем, пыл хурђĕсемпе тĕклĕ-турасем пыл (куланай) пуçтарнă ђух ытларах ђакăртарах тĕслĕ ђеђексем çине лармя туртăнни палăраť. Каланинђен ĕнтĕ—хурт-кăпшанкă ђакăрђипер тĕслĕ ђеђексене ытларах йуратни аван курăнаť. Акă çу иртсе кайаť. Çарансем çинђе ђеђексене вăраллă çимĕçсем улăштараççĕ. Анђах хăшĕсем çинђе çимĕç авантарах, теттĕр есĕр?—Акă хăшĕсем çинђе: хăшĕ çурăлнă ђух ђипертерех, ђакăртарах пулнă, вĕсем çинђе çимĕçĕсем те авантарах тата шултăрарах пулнă. Мĕншĕн-ха ку каллех капла?—Вĕсем çине хурт-кăпшанкă çăрарах çӳренĕ.

Тепĕр çур килсен, пирĕн çарансем каллех ђеђексемпе витĕнеççĕ, анђах вăл çул çарансем çинђе ђакăр ђипер ђеђексем иртнĕ çулхинђен ытларах курăнаççĕ. Мĕншĕн-ха ку капла?—Акă мĕншĕн: иртнĕ çура вĕсен амăшĕсем çине хурт-кăпшăнкăсем ытларах çӳренĕ те, вĕсем вăрă ытларах тунă. Кăçал кашни вăрă каллех хăй ђеђек кӳрет. Ђеђексем хушшинђи ђакăртарах тĕслĕ ђеђексем хăйсен илемĕпе каллех хурт-кăпшанкăна ытларах йавăçтараççĕ. Çакă ĕç çултан çул улăшăнмасăр каланă пек пулса пыраť. Йулашкинђен, çаран çинђе пĕр ђакăр тĕслĕ ђипер çурăлакан çеçкесем анђах йулаççĕ; йапăхрах тĕслисем çултан çул нађарланса пырса йулашкинђен пађ пĕтсе лараççĕ. Куртăри ĕнтĕ?—Ђеђексем хушшинђе те ытти йапаласем хушшинђи пекех суйлану пур. Пĕтĕм каланинђен акă мĕн курăнаť: çĕр çинђе малтанах ђакăр ђипер тĕслĕ ђеђексем пит сайра пулнă. Вĕсем çултан çул йапăхрах тĕслисенђен ытларах хунаса пынипе çеç халђхи шута çитнĕ. Çакă ĕçре ђеђексене хурт-кăпшанкă пит нумай пулăшнă.

---

XVI.

## Йулашкинђен калани.

Акă ĕнтĕ йепле тăраť пурăнăç çут çанталăкра! Пурин ăшĕнђе те пурăнас ĕмĕт анђах; пур ђĕрĕ ђун та çав ĕмĕт аллинђе. Пит хаклă тăраť тавлашса илнĕ пурăнаç ирĕкĕ,

мӗншӗн тесен—пурӑнас тейекенсем пит нумай, вӗсене шутласа та кӑларма ҫук, анђах тӗнђе пурин валли те ҫимӗҫ ҫитерейместь. Акӑ мӗншӗн тӗнђере вӑрҫӑ тӑрать! Акӑ мӗншӗн—вӑйлисем вӑйсӑртараххисемпе, йе вӑйран хӑйсемпе таннисемпе; тискер кайӑксем хӑйсем асӑрханӑ парнисемпе; пӗр йах ђӗрӗ ђун тепӗр йӑхпа, йе хӑйпе тӑван йӑхпах вӑрҫаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑрҫӑ йывӑҫ-курӑк хушшинђе те пур. Йывӑҫ-курӑксем хӑйсене пӗтерекен, сӑтӑр тӑвакан ђӗрӗ ђунсемпе, йе пӗр пӗринпе—апатшӑн, сывлӑшшӑн, ҫутӑпа ӑшӑшӑн пӗр май тавлашаҫҫӗ. Йулашкинђен—ҫӗр ҫинђи мӗн пур ђӗрӗ ђунпа ҫеҫкесем тӗнђенӗн хытӑ ђӗреллӗ, ниме те хӗрхенмен вӑйхӑвађӗсемпе—шатлама сивӗсемпе, ђӑтайми вӗри шӑрӑхсемпе, аслатиллӗ ҫӑмӑрсемпе, йе тата ҫил-тӑвӑлсемпе вӑрҫаҫҫӗ. Ҫӗр ҫинђе пӗр минуттӑ хушшинђе ҫавнашкал вӑрҫӑ темиҫе миллион пулать. Вӑл вӑрҫӑсене тума никама та ђӗнсе пуҫтармаҫҫӗ. Унта ни тупӑ, ни параппан сассисем ҫук, трупапа кӑҫкӑртнӑ сасӑсем те илтӗнмеҫҫӗ. Мӗн пурӗ те: сайра-хутра вӑрман варринђе, йе хирте тискер кайӑкӑн, сӑнсӑрӑн кӑҫкӑрнӑ йе унӑн аллине лекнӗ ђӗрӗ ђунӑн хурлӑхлӑ сассисем ҫеҫ илтӗнме пултараҫҫӗ. Тӑтӑшрах, асӑннӑ ҫӗнтерӳсемпе парӑнусем пӗр сасӑсӑр, тӑппӑн тата асӑрхамалла та мар пулаҫҫӗ. Тӗплӗрех шутласан, вӗсем пур те—пурӑнӑҫ йӗркинђи кашни кун пӗр улӑшӑнмасӑр пулса пыракан ӗҫсемпе анђах танашма пултараҫҫӗ.

Хупа пӗр пеккисемпе, йутсемпе вӑрҫ; тӗнђе йанӑ асаппа (йывӑр пурӑнӑҫпа) тавлаш. Вӑл—ђӗрӗ ђунсемпе ҫеҫкесем хушшинђи пурӑнӑҫ йӗрки. Мӗн пур вӑйна-хӑватна пурӑнӑҫ вӑрҫине кӳрт; йепле май килет, ҫапла сыхлан. Унсӑран сан пурӑнма май та ҫук. Тӗнђе кашни ђӗрӗ ђуна, ҫеҫкене хӑй ҫапла пурӑнма хушать. Ҫакӑ йӗрке (саккун) ыйтнипе (хушнипе), пиншерӗн ҫех шутлама май пур, пӑрахӑнмалли, йе хӳтӗленмелли вӑрҫӑ хатӗрӗсем пулса тӑнӑ. Ҫав тери кансӗр тата йӑвӑр, ӗмӗр тӑрӑшшӗпе кашни пусмаллӑх вырӑнта—кӗретӗн, пӗлсе, йе пӗлмесӗр тата вӑрттӑн пулакан пурӑнӑҫ вӑрҫи ыйтнипе пулнӑ вилӗмрен хӳтӗлесе хӑтаракан майсене те пиншерӗн ҫех шутлама май пур. Кам пурӑнӑҫ вӑрҫине тухма ҫирӗпрех тумланнӑ, тепӗр тӗслӗ каласан, кам ҫийӗнђе вӑрҫӑ хатӗрӗ ҫирӗп, маттур, вӑл пурӑнма йулать. Кам ҫийӗнђе вӑл хатӗр нађар, тата хӑй пурӑнакан вырӑнти йапаласем тӗслӗ те пулайман, вӑл вӑрҫӑ уйӗнђен тухать: унӑн вырӑнне телей-

лёреххисем, йе вӑйлӑраххисем йышӑнаҫҫӗ. Ҫапла, ҫӗр ҫинђе пӗр минуттӑ вӑхӑт та суйланусӑр иртмест. Пӗри пурӑнма йулат̆, тепӗри вилет, пӗтет.

Ђӗрӗ ђунсемпе ҫеҫкесем кӑтартнӑ пурӑнӑҫ йӗркинђен нихӑшӗ те тухма пултараймаҫҫӗ, вӑл вӗсемшӗн улӑшӑнми йӗрке. Хӑйне—вӗри шӑрӑхран, уйартан хӑтараймаҫ ҫеҫке шанат̆; шатлама сивве ђӑтайман, йе унран сыхланма пултарайман ђӗрӗ ђун та вилет. Кама айӑплас ёнтӗ ҫав ҫеҫкесем, йе ђӗрӗ ђунсем пӗтнӗшӗн?—Никама та айӑплама май ҫук. Ҫапла майпа тӗнђе тӑрат̆. Тӗнђе вӑл ӗҫлеме йанӑ машшинӑ йевӗрлӗ йапала: хӑйӗн пӗрре хунӑ йӗркинђен тухмаст̆. Тӗнђенӗн хытӑ ђӗри ҫине кама йӑлӑнас ёнтӗ?—Каллех никама та йӑлӑнма ҫук. Тӗплӗрех шутласан, йӑлӑнма та кирлӗ мар: пурӑнӑҫ хӑй кӑтартса пыракан майсемпе-ҫех усӑ курма пӗлмелле. Акӑ епӗр малалла вӗсенђен пӗрне илсе тӗплӗрех пӑхӑпӑр. Ӑна хӑш йӑх ђӗрӗ ђунсем тахҫанах пурӑнӑҫа йышӑннӑ. Вӑл—пӗр йӑхран (ӑратӑран) тухнӑ ђӗрӗ ђунсем пур те пӗрле килӗштерсе пурӑнни. Пӗђђен пурӑннӑ ђух ху пек тӑшманпа та тавлашма йӑвӑр. Ерттелре вӑл тавлашу сисӗнмест. Ерттел (опђӗствӑ) вӑл—шанђӑклӑ вӑй, аван шкулӑ. Опђӑра ђунупа та ҫирӗпленме йурат̆, ӑс пуҫтарма та май пур. Ҫакна хӑш ђӗрӗ ђунсем тахҫанах сиснӗ те, пӗђђен пурӑнма пӑрӑхнӑ. Халӗ нумайӑшӗ йышпа та мар, ушкӑнпа (тапунпа) пурӑнаҫҫӗ*). Ушкӑнӑн ђленӗсем пӗрле ӗҫлеҫҫӗ, пӗрле савӑнаҫҫӗ, пӗрле хуйхӑраҫҫӗ. Кӗскенӗн каласан, пур ӗҫре те йулташ. Вӗсем пӗрле ҫурт-йӗр ҫавӑраҫҫӗ, апат шыраҫҫӗ, тӑшмансемпе вӑрҫаҫҫӗ; пӗрлех хуйхӑ-суйхӑ тытаҫҫӗ, вӑйсӑртараххисене, тӑшман курайманнисене инкек-синкекрен сыхласа хӑтарма тӑрӑшаҫҫӗ. Ирӗксӗртен (усӑшӑн) пӗрлешсе пурӑнакансем пӗрне пӗри хӑнӑхса пӗр пӗрне йуратма, хак тума вӗренеҫҫӗ. Йулашкинђен, пӗр пӗринпе туслашса, йуратса пурӑнакансем тӑтӑш йулташшӑн вилме те хатӗр пулаҫҫӗ.

Ҫапла—тӗнђере пӗр май ђарӑнмасӑр тӑракан пурӑнӑҫ вӑрҫи ђӗрӗ ђунсене ирӗксӗрех пӗрлештерсе пӗр пӗрне йуратма вӗрентет. Ҫакӑ йапала, пӗрне пӗри йуратса пӗри тепӗриншӗн ђун парас йӗрке, йывӑҫ-курӑк хушшинђе ҫук; ђӗрӗ ђунсем хушшинђе, сайра пулсан та, пур.

---

*) Кун ҫинђен тӗплӗрех пӗлес текенсене Лупкевиђӑн—«Ђӗрӗ ђунсен ерттеллӗ пурӑнӑҫӗ» йатлӑ кӗнекепе вулама канашлатӑп.

Пуранăç вăрçи етемсем хушшинђе те пур, анђах уншăн, ăслă пуçлă йапалалашăн, ђĕрĕ ђунсем пуранăç вăрçине кўртекен хатĕрсене кĕртме намăсрах пулас пулаť. Пуринђен ытла акă мĕн ђуна кўрентерет: етемсенђен нумайăшĕ пуранăç вăрçине—пĕрне те пĕри курайман пирки тухнă инкек вырăнне хурса хăйсем тискерленсе кашкăрсем пек пулса кайаççĕ. Тĕрĕссипе шутласан, етемĕн пĕр пĕринпе кашкăрланса вăрçасси пађах кирлĕ мар. Ун вырăнне акă мĕн тумалла: пĕрлешсе тĕнђенĕн ишĕлтерсе çĕмĕрекен вăй хăвађĕпе тавлашмалла; тĕрĕс мар хуıпăнса пулнă пуранăç йĕркине пăсса йусама тăрăшмалла, етем хушшинђи ђухăнлăха, пулакан усал-киресĕр ĕçсене тата тĕттĕмлĕхе пĕтерме кирлине манмалла мар. Çакă вăрçăна пурин те йермелле. Ăна тума хавасланса тытăнса, шутласа хунă йĕркепе тумалла. Кĕскенĕн каласан: пур те пĕриншĕн, пĕри пуриншĕн те пулмалла. Кăтартнă майпа ĕçлесен тин, тĕнђере пурăнма çăмăл пулĕ.

ХАКĔ 65 ПУС

анҙах ун
вăрçин
ринҙе
пурă
вь